# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КОНСТИТУЦИЙĔ

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2000 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнче*
*йышăннă*

***(Чăваш Республикин 2003 çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 5 №-лĕ, 2004 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 16 №-лĕ, 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ, 2006 çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 47 №-лĕ, 2010 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 27 №-лĕ, 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2012 çулхи çу уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ, 2012 çулхи юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнчи 53 №-лĕ, 2013 çулхи пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнчи 3 №-лĕ, 2013 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 47 №-лĕ, 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 26-мĕшĕнчи 34 №-лĕ, 2016 çулхи ака уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 25 №-лĕ, 2018 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 11 №-лĕ, 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ, 2023 çулхи çу уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 31 №-лĕ, 2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнчи 40 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)***

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ,

чăваш халăхĕн нумай ĕмĕрхи историне хисепленине палăртса,

Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан халăхсен харпăр уйрăмлăхĕсене упраса,

Чăваш Республикине Раççей Федерацийĕн субъекчĕ шутне хурса,

Раççей Федерацийĕнчи халăхсен кун-çулĕ пĕрлĕхлĕ пулнине ăнланса,

Тăван çĕршыв ырлăхĕпе ăнăçлă аталанăвĕшĕн тăрăшса,

этем прависемпе ирĕклĕхĕсене, çынсем хушшинчи тăнăçлăхпа килĕшӳлĕхе çирĕплетсе,

халăхсен тан правăлăхĕпе харпăр хăй ирĕклĕхĕн пурте йышăннă принципĕсене тĕпе хурса,

халăх умĕнчи пысăк яваплăха туйса,

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КОНСТИТУЦИНЕ йышăнать.

## 1 сыпăк. ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КОНСТИТУЦИ ЙĔРКИН НИКĔСĔСЕМ

### 1 статья

1. Чăваш Республики – Чăваш ен Раççей Федерацине кĕрекен республика пулса тăрать.

*(1-мĕш пункта Чăваш Республикин 2012 çулхи çу уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2. "Чăваш Республики" тата "Чăваш ен" тенин пĕлтерĕшĕ пĕрех.

**2 статья**

Этем, унăн прависемпе ирĕклĕхĕсем нимрен те паха. Тĕнчери правăн пурте йышăннă принципĕсемпе тата нормисемпе, Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе тата Чăваш Республикин Конституцийĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикинче этемĕн, гражданинăн прависемпе ирĕклĕхĕсене йышăнаççĕ тата хӳтĕлеççĕ.

**3 статья**

1. Чăваш Республикинче влаçа халăх тытса тăрать.

2. Халăх хăйĕн влаçне тӳррĕнех, çавăн пекех патшалăх влаçĕн органĕсем тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем урлă пурнăçласа пырать. Халăх влаçне тӳррĕн палăртмалли аслă мелсем вĕсем – референдум тата ирĕклĕ суйлав.

3. Чăваш Республикинчи патшалăх влаçĕн органĕсем граждансене патшалăх ĕçĕсене тытса пымалли правăсене пурнăçлама тӳррĕнех е хăйсен представителĕсем урлă майсем туса параççĕ, çав шутра Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсен тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавĕсене вăхăтра палăртас тата çав суйлавсене тивĕçлĕ вăхăтра ирттерес ĕçе саккунпа çирĕплетеççĕ.

*(3-мĕш пункта Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ, 2013 çулхи пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнчи 3 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

4. Чăваш Республикинчи патшалăх влаçĕ çак принципсем çинче тытăнса тăрать:

1) Раççей Федерацийĕн патшалăх тата территори пĕр пĕтĕмлĕхĕ;

2) Раççей Федерацийĕн суверенитечĕ унăн пĕтĕм территорийĕнче вăйра тăни;

3) Чăваш Республикин территорийĕнче Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ, федераци саккунĕсем нимрен аслă пулни;

4) патшалăх влаçĕн органĕсене йĕркеленĕ чухне тата ăна пурнăçа кĕртнĕ чухне право нимрен аслă пулни;

5) пĕр пĕтĕм патшалăх влаçĕ саккун кăларакан влаçа, ĕç тăвакан влаçа тата суд влаçне пайланни, вĕсен полномочийĕсене çураçуллă шайлаштарма, мĕн пур полномочисем е вĕсен пысăкрах пайĕ патшалăх влаçĕн пĕр органĕ е должноçри

пĕр çын аллине пухăнасран сыхланма çав виçĕ власть хăйĕн ĕçне килĕштерсе пыни;

6) Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе, федераци саккунĕсемпе çураçуллăн Раççей Федерацийĕн патшалăх влаçĕн органĕсемпе Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче вĕсем татса паракан ыйтусене тата вĕсен полномочийĕсене уйăрни;

7) Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хăйсене тивĕç полномочисене харпăр хăй тĕллĕн пурнăçласа пыни;

8) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем хăйсене тивĕç полномочисене харпăр хăй тĕллĕн пурнăçласа пыни;

9) *(9-мĕш çум пункт хăйĕн вăйне çухатнă. – Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ саккунĕ.)*;

10) республикăн патшалăх влаçĕн саккун кăларакан органне – Чăваш Республикин Патшалăх Канашне суйлани;

*(10-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

11) патшалăх, унăн органĕсемпе должноçри çыннисем саккунпа килĕшӳллĕн яваплă пулни.

5. Чăваш Республикинче патшалăх влаçне Чăваш Республикин Пуçлăхĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, судсем пурнăçласа тăраççĕ.

*(5-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

6. Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсен полномочийĕсене Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ, федераци саккунĕсем, Чăваш Республикин Конституцийĕ, Чăваш Республикин саккунĕсем çирĕплетеççĕ, вĕсене улăштарас пулсан, федерацин çĕнĕ саккунĕсене йышăнса, Раççей Федерацийĕн Конституцине тивĕçлĕ тӳрлетӳсем кĕртмелле е унăн положенийĕсене çĕнĕрен пăхса тухмалла, Чăваш Республикин çĕнĕ Конституцине тата Чăваш Республикин çĕнĕ саккунĕсене йышăнмалла е вăйра тăракан асăннă актсене тивĕçлĕ улшăнусемпе хушăмсем кĕртмелле.

7. Власть полномочийĕсене саккунсăр кирек мĕнле майпа ярса илнĕшĕн федераци саккунĕ тăрăх айăпласçĕ.

*(7-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

**4 статья**

Чăваш Республикинче уйрăм харпăрлăха, патшалăх харпăрлăхне, муниципаллă е ытти тĕрлĕ харпăрлăха, экономикăри ĕç-хĕл ирĕклĕхне, таварсем, пулăшу ĕçĕсем тата укçа-тенкĕ ирĕклĕ куçса тăнине пĕр танах йышăнаççĕ тата хӳтĕлеççĕ, ĕçре пĕр-пĕринпе тупăшма май туса параççĕ.

**5 статья**

1. Чăваш Республикин территорийĕнчи çĕрпе ун айĕнчи пуянлăх, шывшур тата çут çанталăкăн ытти пуянлăхĕсем Чăваш Республики халăхĕн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕн никĕсĕ пулса тăраççĕ, вĕсемпе федераци саккунĕсемпе тата, Чăваш Республикин полномочи шайĕнче, унăн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн усă кураççĕ.

2. Çĕр тата çут çанталăкăн ытти пуянлăхĕсем уйрăм харпăрлăхра, патшалăх харпăрлăхĕнче, муниципаллă тата ытти тĕрлĕ харпăрлăхра пулма пултараççĕ.

**6 статья**

1. Чăваш Республики чăваш халăхĕн культурине упраса аталантарассишĕн явап тытать, республикăра пурăнакан пур халăхсен культурине аталантарма пулăшать.

2. Чăваш Республикинче тĕрлĕ идеологисене тата политикăна, нумай партилĕхе йышăнаççĕ.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

3. Общество пĕрлешĕвĕсем саккун умĕнче пĕр тан.

4. Тĕн пĕрлешĕвĕсем патшалăхран уйрăм тăраççĕ, вĕсем саккун умĕнче пурте пĕр тан.

**7 статья**

Патшалăх ĕçĕ-хĕлĕн тĕллевĕ – этеме пурăнма тата ирĕклĕн аталанма тивĕçлĕ майсем туса парасси, халăх пурнăçне лайăхлатасси, ăна чи кирлĕ пурлăх-ырлăхпа тата ăс-хакăл пуянлăхĕсемпе тивĕçтересси.

**8 статья**

Чăваш Республикин патшалăх чĕлхисем – чăваш чĕлхи тата вырăс чĕлхи.

**9 статья**

Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăх йĕрки вăйра тăрать. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем патшалăх влаçĕн органĕсен шутне кĕмеççĕ, Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ, федераци саккунĕсем тата вĕсемпе килĕшӳллĕн йышăннă Чăваш Республикин ытти саккунĕсем çирĕплетнĕ шайра вырăнти кирлĕ ыйтусене харпăр хăй тĕллĕн татса параççĕ.

*(9 статьяна Чăваш Республикин 2012 çулхи çу уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

**10 статья**

Раççей Федерацийĕ татса паракан ыйтусене тата Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республики пĕрле татса паракан ыйтусенчи Раççей Федерацийĕн полномочийĕсене шута илмесен, Чăваш Республикин Конституцийĕ право тĕлĕшĕнчен нимрен çӳлте тăрать, тӳррĕнех ĕçе кĕрет, Чăваш Республикин пĕтĕм территорийĕнче вăйра тăрать.

**11 статья**

1. Чăваш Республикинче йышăнакан саккунсем тата ытти нормативлă право акчĕсем Раççей Федерацийĕн Конституцине тата Чăваш Республикин Конституцине, çавăн пекех Раççей Федерацийĕ татса паракан е Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республики пĕрле татса паракан ыйтусемпе йышăннă федераци саккунĕсене хирĕçлени пулмалла мар.

2. Саккунсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларас пулать. Пичетлемен саккунсем вăя кĕмеççĕ. Этемĕн, гражданинăн прависемпе ирĕклĕхĕсене тата тивĕçĕсене тивекен кирек мĕнле нормативлă право акчĕсем, вĕсене пурне те пĕлтерме официаллă майпа пичетлесе кăларман пулсан, вăя кĕме пултараймаççĕ.

**12 статья**

Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ, федераци саккунĕсем тата Раççей Федерацийĕн патшалăх влаçĕн органĕсемпе Чăваш Республикин патшалăх

влаçĕн органĕсем хушшинчи договорсем паракан полномочисен шайĕнче Чăваш Республики урăх çĕршывсемпе çыхăнать, тулашри экономика çыхăнăвĕсем тытать, тĕнчери организацисен ĕçне хутшăнать.

### 13 статья

Çак сыпăкра каланисем Чăваш Республикин конституци йĕркин никĕсĕ пулса тăраççĕ. Çак Конституцин ытти сыпăкĕсенчи нимĕнле положенисем те Чăваш Республикин конституци йĕркин никĕсĕсене хирĕçлеме пултараймаççĕ.

## 2 сыпăк. ЭТЕМĔН ТАТА ГРАЖДАНИНĂН ПРАВИСЕМПЕ ИРĔКЛĔХĔСЕНЕ ХӲТĔЛЕССИ

### 14 статья

1. Чăваш Республикинче этемĕн, гражданинăн Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ çирĕплетнĕ мĕн пур прависемпе ирĕклĕхĕсене йышăнаççĕ тата гарантилеççĕ, вĕсене пурнăçлама май туса параççĕ, хӳтĕлеççĕ.

2. Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан Раççей Федерацийĕн кашни гражданинĕн Раççей Федерацийĕн Конституцийĕнче тата Чăваш Республикин Конституцийĕнче кăтартнă мĕн пур правăсемпе ирĕклĕхсем тата тан тивĕçсем пур.

3. Чăваш Республикинче этемĕн, гражданинăн прависемпе ирĕклĕхĕсене пăрахăçлакан е чакаракан саккунсем тата ытти нормативлă право акчĕсем кăларни пулмалла мар.

### 15 статья

1. Этемĕн тĕп прависемпе ирĕклĕхĕсем мĕн çуралнăранпах кашни çын тивĕçĕ пулса тăраççĕ, вĕсене тытса илме çук.

2. Этемĕн, гражданинăн прависемпе ирĕклĕхĕсене пурнăçлани урăх çынсен прависемпе ирĕклĕхĕсене пăсмалла мар.

### 16 статья

Этемĕн, гражданинăн прависемпе ирĕклĕхĕсем тӳррĕнех ĕçе кĕреççĕ. Çак тĕллеве пăхăнать саккунсен пĕлтерĕшĕпе тытăмĕ, вĕсемпе усă курасси, саккун кăларакан тата ĕç тăвакан влаçăн, вырăнти хăй тытăмлăхăн ĕçĕ-хĕлĕ, çакна суд ĕçĕ хӳтĕлет.

**17 статья**

1. Саккун тата суд умĕнче пурте тан.

2. Чăваш Республикинче этеме, гражданина пĕр тан правăсемпе ирĕклĕхсем параççĕ, вăл арçын е хĕрарăм, мĕнле раса, наци çынни пулнине, мĕнле чĕлхепе калаçнине пăхмаççĕ, йăх-ăру несĕлне, пурлăх пуррине, мĕн ĕçре тăнине, ăçта пурăннине, епле тĕн тытнине, шухăш-кăмăлне, общество пĕрлешĕвĕсене хутшăннине е ытти сăлтавсене уямаççĕ. Граждансен прависене социаллă сăлтавпа, мĕнле раса, наци çынни пулнине, мĕнле чĕлхепе калаçнине, епле тĕн тытнине кура кирек мĕнле майпа пӳлсе чакарма юрамасть.

3. Арçынпа хĕрарăмăн пĕр тан правăсемпе ирĕклĕхсем, вĕсене пурнăça кĕртмелли тан майсем пур.

**18 статья**

1. Кашни çыннăн пурнăç прави пур.

2. Патшалăх этем тивĕçлĕхне хӳтĕлет. Ăна нимĕнле сăлтавпа та чакарма юрамасть.

3. Никама та асаплантарма, ирĕксĕрлеме, хаяррăн пусахлама е этем тивĕçлĕхне мăшкăлласа хĕн кăтартма юрамасть. Çын хăй ирĕкĕпе килĕшмесĕр никампа та медицина, ăслăлăх сăнавĕсем е ытти йышши сăнавсем тума юрамасть.

**19 статья**

1. Кашни çыннăн ирĕклĕ, никам тĕкĕнмесĕр пурăнма право пур.

2. Çынна суд йышăннипе кăна арестлеме тата тытса хупса усрама юрать. Суд йышăниччен çынна 48 сехетрен ытла хупса усрама юрамасть.

**20 статья**

1. Кашни çыннăн харпăр пурнăçне никам хутшăнмасăр йĕркелеме, харпăр вăрттăнлăхĕпе кил-йыш вăрттăнлăхне упрама, хăйĕн чысĕпе тивĕçлĕхне хӳтĕлеме право пур.

2. Кашни çыннăн вăрттăнлăха упраса çыру çӳретмелли, телефонпа калаçмалли, почтăпа, телеграфпа е ытти майпа çыхăнмалли право пур. Çак правăна суд йышăннипе кăна пӳлсе чакарма пулать.

## 21 статья

1. Çын хăй килĕшмесĕр унăн харпăр пурнăçĕ çинчен хыпарсем пуçтарса упрама, вĕсемпе усă курма, вĕсене сарма юрамасть.

2. Патшалăх влаçĕн органĕсемпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, вĕсен должноçри çыннисем, саккунпа урăхла тума пăхман пулсан, кашни çынна унăн прависемпе ирĕклĕхĕсене тӳррĕнех пырса тивекен документсемпе тата материалсемпе паллаштарма тивĕç.

## 22 статья

Çын кил-çуртне тĕкĕнме юрамасть. Федераци саккунĕсенче кăтартман чухне е суд йышăнман пулсан, кил-çуртра пурăнакансем ирĕк памасăр унта никам та пырса кĕме пултараймасть.

## 23 статья

1. Кашниех хăй мĕнле наци çынни пулнине палăртса кăтартма пултарать. Çынна унăн нацилĕхне палăртса кăтартмашкăн никам та хушма пултараймасть.

2. Кашни çыннăн харпăр тăван чĕлхипе усă курма, хутшăнмалли, ачасене пăхса ӳстермелли, вĕренмелли, пултарулăх ĕçĕнче усă курмалли чĕлхене ирĕклĕн суйласа илме право пур.

## 24 статья

Чăваш Республикин территорийĕнче саккунлă майпа пурăнакан кашни çыннăн, федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн, ирĕклĕ куçса çӳреме, ăçта пулмаллине, пурăнмаллине палăртма право пур.

## 25 статья

Кашни çынна совесть ирĕклĕхне, тĕн тытас ирĕклĕхе пурнăçлама май параççĕ, çакна май çын хăй уйрăммăн е ыттисемпе пĕрле кирек мĕнле тĕн тытма е нимĕнле тĕн тытмасăр пурăнма, тĕн ăнланăвĕсемпе ытти тĕрлĕ ăнланусене ирĕклĕн суйласа илсе уяма тата сарма, хăйне вĕсемпе килĕшӳллĕн тыткалама пултарать.

## 26 статья

1. Кашни çынна шухăшлав тата сăмах ирĕклĕхĕпе усă курма май параççĕ.

2. Социаллă сăлтавпа, раса, наци е тĕн сăлтавĕпе курайманлăх, тăшманлăх çуратакан пропаганда е агитаци пулмалла мар. Вăрçа мухтама, пĕр çын теприн-чен социаллă тăрăмĕпе, раса, наци, тĕн е чĕлхе паллипе маларах тăнине пропа-гандăлама чараççĕ.

3. Никама та харпăр шухăшĕсемпе ăнланăвĕсене вăйпа калаттарма е вĕсене каламашкăн чарма юрамасть.

4. Кашни çыннăн саккунлă кирек мĕнле майпа ирĕклĕн пĕлӳ-хыпар шы-рама, илме тата парса тăма, хатĕрлесе салатма право пур.

5. Массăллă информаци ирĕклĕхне пурнăçлама май параççĕ. Цензура тума чараççĕ.

## 27 статья

1. Кашни çыннăн ыттисемпе пĕрлешме, вăл шутра харпăр интересĕсене хӳтĕлес тĕллевпе професси союзĕсем йĕркелеме право пур. Общество пĕр-лешĕвĕсене ирĕклĕн ĕçлеме май параççĕ.

2. Никама та пĕр-пĕр пĕрлешĕве вăйпа кĕртме е унта тăмашкăн пусах-лама юрамасть.

## 28 статья

Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан Раççей Федерацийĕн гражданĕсен мирлĕн, хĕç-пăшалсăр пухăнма, пухусем, митингсемпе демонстра-цисем ирттерме, ушкăнпа пухăнса çӳреме тата пикетсем йĕркелеме право пур.

## 29 статья

1. Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан Раççей Федерацийĕн гражданĕсен патшалăх ĕçĕсене тытса пымашкăн тӳррĕн те, хăйсен представи-телĕсем урлă та хутшăнма право пур.

2. Раççей Федерацийĕн гражданĕсен патшалăх влаçĕн органĕсене тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене суйлама тата вĕсене суйланма, çавăн пекех референдума хутшăнма право пур.

3. Суд хавшак ăс-хакăллă тесе йышăннă, çавăн пекех суд приговорĕпе ирĕксĕр усракан вырăнсене хупнă граждансен суйлама тата суйланма право çук.

4. Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан Раççей Федерацийĕн гражданĕсен патшалăх службинче тăма пĕр тан майсем пур.

5. Раççей Федерацийĕн гражданĕсен правосудие пурнăçламашкăн хутшăнма право пур.

**30 статья**

Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан Раççей Федерацийĕн гражданĕсен патшалăх влаçĕн органĕсене тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене ĕçпе пыма, çавăн пекех уйрăммăн е ушкăнпа çыру яма право пур.

**31 статья**

1. Кашни çыннăн харпăр хăйĕн пултарулăхĕпе тата пурлăхĕпе предприниматель ĕçĕ-хĕлĕнче тата саккун чарман ытти йышши экономика ĕçĕнче усă курма право пур.

2. Экономика ĕçне-хĕлне монополи тăвас, ултавлă майпа тупăшас тĕллевпе туса пыни пулмалла мар.

**32 статья**

1. Уйрăм харпăрлăх правине саккун хӳтĕлет.

2. Кашни çын харпăрлăхра пурлăх тытма, унпа хăй уйрăммăн та, урăх çынсемпе пĕрле те усă курма пултарать.

3. Суд йышăнмасăр никам пурлăхне те туртса илме юрамасть. Пурлăха патшалăх нуши валли вăйпа тытса илес пулсан унăн хакне малтан туллин сапламалла.

4. Еткер илмелли право вăйра тăрать.

**33 статья**

1. Граждансен тата вĕсен пĕрлешĕвĕсен уйрăм харпăрлăхра çĕр тытма право пур.

2. Çĕре тата çут çанталăкăн ытти пуянлăхĕсене харпăрлăхра тытмалли, вĕсемпе усă курмалли, сутмалли-илмелли правăсене федераци саккунĕ конституци йĕркин никĕсĕсене, этеплĕхе, ытти çынсен сывлăхне, прависене тата саккунлă интересĕсене, патшалăх хăрушсăрлăхне хӳтĕлеме кирлĕ чухне кăна чакарма пултарать.

## 34 статья

1. Ĕçлев ирĕклĕ. Кашни çыннăн харпăр хăйĕн ĕçри пултарулăхĕпе ирĕклĕн усă курма, хăйне валли мĕнле те пулин ĕç тата професси суйласа илме право пур.

2. Вăйпа хистесе ĕçлеттерме юрамасть.

3. Кашни çыннăн хăрушсăрлăх тата гигиена ыйтнисене тивĕçтерекен лару-тăрура ĕçлеме, ĕçшĕн нимĕнле дискриминацисĕр тата федераци саккунĕнче палăртнă ĕç тӳлевĕн чи пĕчĕк виçинчен кая мар укça илмелли право, çавăн пекех ĕççĕрлĕхрен хӳтĕленмелли право пур. Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем ĕç вырăнĕсене сыхласа хăварас, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелес, ĕçлев правине пурнăçа кĕртме май парас тĕллевпе мĕн кирлине тăваççĕ.

4. Уйрăм çынсен тата коллективсен ĕç тавлашăвĕсем пуçарма, вĕсене федераци саккунĕ çирĕплетнĕ мелсемпе усă курса, вăл шутра забастовка тунипе татса пама право пуррине йышăнаççĕ.

5. Кашни çыннăн кану прави пур. Ĕçлев договорĕпе ĕçлекене федераци саккунĕнче çирĕплетнĕ ĕç вăхăчĕ, канмалли кунсем, уяв кунĕсем, çуллен тӳлевлĕ отпуск гарантилеççĕ.

## 35 статья

1. Патшалăх ача амăшĕсемпе ачасене, çемьене хӳтĕлет.

2. Ачасемшĕн, вĕсене пăхса ӳстерессишĕн тăрăшасси ашшĕ-амăшĕн тан прави тата тивĕçĕ пулса тăрать.

3. 18 çула çитнĕ, ĕçлеме пултаракан çамрăксем хăйсен ĕçлеме пултарайман ашшĕ-амăшне пăхса усрама тивĕçлĕ.

## 36 статья

1. Кашни ҫынна ҫул ҫитсен, чирлесен, инвалида тухсан, тӑрантараканӗ вилсен, ача-пӑчана пӑхса усрама тата саккун палӑртнӑ ытти сӑлтавсемпе социаллӑ пулӑшу параҫҫӗ.

2. Патшалӑх пенсийӗсемпе социаллӑ пулӑшусене саккун ҫирӗплетет.

3. Ирӗклӗ социаллӑ страхлавпа социаллӑ пулӑшӑвӑн хушма формисене, ыр кӑмӑллӑх ӗҫне аталантарма пулӑшаҫҫӗ.

## 37 статья

1. Кашни ҫыннӑн кил-ҫурт тытма право пур. Никама та вӑйпа кил-ҫуртсӑр хӑварма юрамасть.

2. Патшалӑх влаҫӗн органӗсемпе вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсем ҫынсене кил-ҫурт лартма пулӑшаҫҫӗ, кил-ҫурт тытмалли правӑна пурнӑҫлама майсем туса параҫҫӗ.

3. Чухӑн ҫынсене тата кил-ҫурт тӗлӗшӗнчен хӗсӗк пурӑнакан, саккунра кӑтартнӑ ытти граждансене патшалӑх, муниципалитет фончӗсенчен тата ытти кил-ҫурт фончӗсенчен тӳлевсӗрех е виҫеллӗ хакпа, саккун палӑртнӑ нормӑсем тӑрӑх хваттер параҫҫӗ.

## 38 статья

1. Кашни ҫыннӑн сывлӑха сыхлама тата медицина пулӑшӑвӗ илме право пур.

2. Патшалӑх сывлӑх сыхлавӗн патшалӑх тата муниципалитет учрежденийӗсенче тивӗҫлӗ бюджет, страхлав тӳлевӗсем тата ытти тупӑш укҫи шучӗпе тӳлевсӗр медицина пулӑшӑвӗ парассине гарантилет.

3. Чӑваш Республикинче халӑх сывлӑхне сыхламалли тата ҫирӗплетмелли республика программисене пурнӑҫлама укҫа-тенкӗ уйӑрса параҫҫӗ, сывлӑх сыхлавӗн патшалӑх, муниципалитет, уйрӑм харпӑрлӑх системисене аталантарма кирлӗ ӗҫсем тӑваҫҫӗ, этем сывлӑхне ҫирӗплетмелли, физкультурӑпа спорта аталантармалли, экологи тата санитарипе эпидемиологи лару-тӑрӑвне лайӑхлатмалли ӗҫе-хӗле сарма хавхалантараҫҫӗ.

4. Должноҫри ҫынсем граждансен пурнӑҫӗпе сывлӑхӗшӗн хӑрушлӑх кӳрекен фактсемпе сӑлтавсене халӑхран пытарса тӑраҫҫӗ пулсан вӗсене федераци саккунӗ тӑрӑх явап тыттараҫҫӗ.

## 39 статья

Кашни ҫыннӑн сывлӑхшӑн сиплӗ хутлӑхра пурӑнма, унӑн тӑрӑмӗ ҫинчен тӗрӗс пӗлӳ-хыпар илсе тӑма, экологи йӗркине пӑснӑ пирки унӑн сывлӑхне кӳнӗ сиене саплаштарма право пур.

## 40 статья

1. Кашни ҫыннӑн вӗренсе пӗлӳ илме право пур.

2. Патшалӑхӑн е муниципалитетӑн вӗренӳ учрежденийӗсенче тата предприятисенче пур ачасене те тӳлевсӗрех шкулччен пӗлӳ, пӗтӗмӗшле тӗп тата вӑтам професси пӗлӗвӗ парассине гарантилеҫҫӗ.

*(2-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2013 ҫулхи пуш уйӑхӗн 6-мӗшӗнчи 3 №-лӗ саккунӗпе улшӑну кӗртнӗ.)*

3. Кашни ҫын патшалӑхӑн е муниципалитетӑн вӗренӳ учрежденийӗнче тата предприятире конкурс йӗркипе тӳлевсӗрех аслӑ пӗлӳ илме пултарать.

4. Пурте пӗтӗмӗшле тӗп шкулта вӗренсе пӗлӳ илме тивӗҫлӗ. Ашшӗ-амӑшӗ тата вӗсен вырӑнне юлнӑ ҫынсем ачасене пӗтӗмӗшле тӗп пӗлӳ илме май туса параҫҫӗ.

5. Чӑваш Республики вӗренӗвӗн тата харпӑр хӑй тӗллӗн пӗлӳ илессин тӗрлӗ формисене аталантарма пулӑшать.

## 41 статья

1. Кашни ҫынна литературӑра, илемлӗ ӳнерте, ӑслӑлӑхра, техникӑра тата ытти пултарулӑх енӗпе ирӗклӗн ӗҫлеме, ачасене вӗрентме майсем туса параҫҫӗ. Ӑс-хакӑл харпӑрлӑхне саккун хӳтӗлет.

2. Кашни ҫыннӑн культура пурнӑҫне хутшӑнма тата культура учрежденийӗсемпе усӑ курма, культура хаклӑхӗсене алла илме право пур.

3. Чӑваш Республики хӑйӗн ҫӗрӗ ҫинче пурӑнакан пур халӑхсен культурине сыхласа хӑварма тата аталантарма пӗр тан майсем туса парать, ҫавӑн пекех Чӑваш Республики тулашӗнче пурӑнакан чӑвашсен наци культурипе вӗренӳ ыйтӑвӗсене тивӗҫтерме пулӑшать.

4. Кашни ҫын истори тата культура еткерне сыхласа хӑварассишӗн тӑрӑшма, историпе культура палӑкӗсене упрама тивӗҫ.

**42 статья**

1. Чăваш Республикинче патшалăх этемĕн, гражданинăн прависемпе ирĕклĕхĕсене шанчăклăн хӳтĕлет.

2. Кашни çын хăйĕн прависемпе ирĕклĕхĕсене саккун чарман кирек епле майпа хӳтĕлеме пултарать.

**43 статья**

1. Кашни çынна унăн прависемпе ирĕклĕхĕсене судра хӳтĕлеме май параççĕ.

2. Патшалăх влаçĕн органĕсем, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, общество пĕрлешĕвĕсем тата должноçри çынсем тунă йышăнусем тата ĕçсем пирки (е ĕçе туман пирки) суда жалоба пама пулать.

3. Право хӳтĕлевĕн хамăр патшалăхри майĕсем çителĕксĕр пулсан кашни çын, Раççей Федерацийĕ тĕнче шайĕнче тунă договорсемпе килĕшӳллĕн, этем прависемпе ирĕклĕхĕсене хӳтĕлекен тĕнчери органсене жалоба пама пултарать.

**44 статья**

Пĕр-пĕр суд тата судья çын ĕçне пăхса тухма тивĕçлĕ пулсан çыннăн саккунпа палăртнă çак правине пăсма юрамасть.

**45 статья**

1. Кашни çыннăн тивĕçлĕ шайра юрист пулăшăвĕ илме право пур. Саккунра кăтартнă чухне юрист пулăшăвне тӳлевсĕр параççĕ.

2. Тытса хупса ирĕксĕр усракан, преступлени тунă тесе айăпланакан кашни çыннăн, тытса хупнă, ирĕксĕр усрама тытăннă е айăпласа каланă самантран пуçласа, адвокат (хӳтĕлевçĕ) пулăшăвĕпе усă курма право пур.

**46 статья**

1. Преступлени тунă тесе айăпланакан кашни çын, ун айăпне федераци саккунĕнче кăтартнă йĕркепе уçса парса саккунлă вăя кĕнĕ суд приговорĕпе çирĕплетиччен, айăпсăр шутланать.

2. Айăпланакан çын хăй айăпсăррине çирĕплетсе пама тивĕç мар.

3. Çын айăпĕ пирки сирме çук иккĕленӳсем пулсан вĕсене çав çынна майлă ăнлантараççĕ.

**47 статья**

1. Пĕр преступленишĕнех никама та тепĕр хут айăплама юрамасть.

2. Суд ĕçне туса пынă чухне федераци саккунне пăсса пухнă тĕслĕхсемпе усă курни пулмалла мар.

3. Преступлени тунăшăн айăпланă кашни çыннăн, федераци саккунĕ çирĕплетнĕ йĕркепе, приговора аслăрах судра çĕнĕрен пăхса тухтарма, çавăн пекех хăйне каçармашкăн е наказание çăмăллатмашкăн ыйтма право пур.

**48 статья**

Никам та харпăр хăйне, хăйĕн мăшăрне тата федераци саккунĕнче кăтартнă çывăх тăванĕсене айăпласа калама тивĕç мар.

**49 статья**

Преступлени тунине пула е влаçпа тивĕççĕр усă курнине пула инкеке лекнĕ çынсен прависене патшалăх хӳтĕлет. Патшалăх çавнашкал инкек курнă çынсене судра ĕç пуçарма, тӳснĕ шырлăха саплаштарма май туса парать.

**50 статья**

Кашни çыннăн патшалăх влаçĕн органĕсем е вĕсен должноçри çыннисем тунă саккунсăр ĕççене пула (е ĕçе туманнине пула) кӳнĕ сиене патшалăха саплаттарма право пур.

**51 статья**

1. Яваплăха çирĕплетекен е вăйлатакан саккун хăйчченхи вăхăтшăн вăйра тăмасть.

2. Пĕр-пĕр ĕçе тунă чухне çав ĕç айăп туни тесе шутланман пулсан уншăн никама та явап тыттарма юрамасть. Правăна пăснă хыççăн çав ĕçшĕн явап тыттарма пăрахнă пулсан е яваплăха чакарнă пулсан çĕнĕ саккун вăя кĕрет.

**52 статья**

1. Чăваш Республикин Конституцийĕнче тĕп правăсемпе ирĕклĕхсене палăртса панине этемĕн, гражданинăн пурте йышăннă ытти прависемпе ирĕклĕхĕсене уяманни е шута хуманни тесе ăнланмалла мар.

2. Конституци йĕркин никĕсне, этеплĕхе, ытти çынсен сывлăхне, прависемпе саккунлă тивĕçĕсене хӳтĕлеме, çĕршыва сыхлама, патшалăх хăрушсăрлăхне çирĕплетме кирлĕ чухне кăна федераци саккунĕ этем, гражданин прависемпе ирĕклĕхĕсене чакарма пултарать.

## 53 статья

1. Кашни çын Раççей Федерацийĕн Конституцине тата Чăваш Республикин Конституцине, федераци саккунĕсене тата Чăваш Республикин саккунĕсене тытса пыма, ытти çынсен прависемпе ирĕклĕхĕсене хисеплеме, саккун кăтартса панă ытти хушусене пурнăçлама тивĕç.

2. Официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă нормативлă право актне пĕлменни ăна пурнăçламаншăн яваплăхран хăтармасть.

## 54 статья

Кашни çын саккунпа палăртнă налуксемпе тӳлевсене хывма тивĕçлĕ. Çĕнĕ налук кĕртекен е налук тӳлекенсен пурнăçне йывăрлатакан саккунсем хăйсемчченхи вăхăтшăн вăйра тăмаççĕ.

## 55 статья

Кашни çын çут çанталăка тата хамăр тавралăха сыхлама, çут çанталăк пуянлăхĕсене упрама тивĕçлĕ.

## 56 статья

1. Тăван çĕршыва хӳтĕлесси Раççей Федерацийĕн гражданинĕн чыслă ĕçĕпе тивĕçĕ пулса тăрать.

2. Раççей Федерацийĕн гражданинĕ федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн çар службинче тăрать.

3. Раççей Федерацийĕн гражданинĕн шухăш-кăмăлĕ е тĕн ĕненĕвĕ çар службинче тăрассипе килĕшсе тăмасть пулсан, çавăн пекех федераци саккунĕнче палăртнă ытти лару-тăрура унăн çар служби вырăнне альтернативлă гражданла служба кайма право пур.

**57 статья**

Раççей Федерацийĕн гражданинĕ хăйĕн прависемпе тивĕçĕсене 18 çула çитсен харпăр хăй тĕллĕн, туллин пурнăçласа пыма пултарать.

**58 статья**

Чăваш Республикин саккунĕсем, Чăваш Республикин укçи-тенкипе, пурлăхĕпе тата ытти майĕсемпе усă курса, этем тата гражданин прависемпе ирĕклĕхĕсене пурнăçламашкăн Раççей Федерацийĕн Конституцийĕнче тата федераци саккунĕсенче палăртман хушма гарантисем çирĕплетме пултараççĕ.

## 3 сыпăк. ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ЙЫШĔНЧИ СТАТУСĔ

**59 статья**

1. Чăваш Республики Раççей Федерацийĕн субъекчĕ пулса тăрать.

2. Чăваш Республикин Раççей Федерацийĕ йышĕнчи статусне Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ тата Чăваш Республикин Конституцийĕ палăртаççĕ.

3. Чăваш Республикин статусне, федерацин конституци саккунĕпе килĕшӳллĕн, Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республики пĕр-пĕринпе килĕшсен кăна улăштарма пулать.

**60 статья**

1. Чăваш Республикин çак Конституцие йышăннă чухне палăртнă чиккисенчи территорийĕ пĕр пĕтĕм, пайланми хутлăх пулса тăрать.

2. Чăваш Республикин чиккисене Раççей Федерацийĕн тивĕçлĕ субъекчĕсем пĕр-пĕринпе килĕшнĕ тăрăх Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ тата федераци саккунĕ çирĕплетнĕ йĕркепе улăштарма пултараççĕ.

3. Чăваш Республики Улатăр, Элĕк, Патăрьел, Вăрнар, Йĕпреç, Канаш, Куславкка, Комсомольски, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Пăрачкав, Вăрмар, Çĕрпӳ, Шупашкар, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Етĕрне, Елчĕк, Тăвай районĕсенчен; республика пĕлтерĕшлĕ Улатăр, Канаш, Çĕнĕ Шупашкар, Шупашкар, Çĕмĕрле хулисенчен тăрать.

4. Районсем, хуласем, ялсем тăвас, вĕсене пĕрлештерес, пăрахăçлас, ячĕсене улăштарас, çавăн пекех вĕсен администраци центрĕсене палăртас тата куçарас ыйтусене, администраци-территори тытăмĕн ытти ыйтăвĕсене Чăваш Республикин саккунĕпе палăртаççĕ.

*(4-мĕш пункта Чăваш Республикин 2006 çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 47 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

**61 статья**

1. Раççей Федерацийĕ татса памалли ыйтусене тата Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республики пĕрле татса паракан ыйтусенчи Раççей Федерацийĕн полномочийĕсене шута илмесен, Чăваш Республики хăйĕн территорийĕнче патшалăх влаçне туллин пурнăçласа пырать.

2. Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республики пĕрле татса паракан ыйтусем шутне Раççей Федерацийĕн Конституцийĕн 72 статйинче кăтартса панă ыйтусем кĕреççĕ.

3. Чăваш Республики татса паракан ыйтусем шутне çаксем кĕреççĕ:

1) Чăваш Республикин Конституцине йышăнасси, унта улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси;

2) Чăваш Республикин саккунĕсене тата ытти нормативлă право акчĕсене йышăнасси;

3) Раççей Федерацийĕн конституци йĕркин никĕсĕсемпе тата Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсен тытăмне палăртасси;

*(3-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2006 çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 47 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

4) Чăваш Республикин социаллă пурнăçĕпе экономика политикине пурнăça кĕртсе пырасси;

5) Чăваш Республикин республика бюджетне йышăнса пурнăça кĕртесси тата вăл пурнăçланнине çинчен калакан отчета çирĕплетесси;

6) *(6-мĕш çум пункт хăйĕн вăйне çухатнă. – Чăваш Республикин 2006 çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 47 №-лĕ саккунĕ.)*;

7) Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхне тытса тăрасси тата унпа усă курасси;

8) Чăваш Республикин патшалăх граждан службине йĕркелесси;

*(8-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2006 çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 47 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

9) Чăваш Республикин администраци-территори тытăмне палăртасси;

10) Чăваш Республикин патшалăх наградисемпе хисеплĕ ячĕсене палăртасси;

11) Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ, федераци саккунĕсем, Чăваш Республикин Конституцийĕ тата Чăваш Республикин саккунĕсем палăртнă ытти полномочисене пурнăçласа пырасси.

4. Чăваш Республики татса паракан ыйтусемпе Чăваш Республикин саккунĕсене тата ытти нормативлă право акчĕсене йышăнаççĕ. Федераци саккунĕ тата Чăваш Республики татса паракан ыйтусемпе йышăннă Чăваш Республикин нормативлă право акчĕ хушшинче хирĕçлĕх пур пулсан Чăваш Республикин нормативлă право акчĕ вăйра тăрать.

## 62 статья

1. Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республики пĕрле пăхакан ыйтусене Раççей Федерацийĕн Конституцине тата Чăваш Республикин Конституцине, çавăн пекех федераци саккунĕсене, Чăваш Республикин нормативлă право акчĕсене, Раççей Федерацийĕн патшалăх влаçĕн органĕсемпе Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче пăхса тухмалли ыйтусемпе полномочисене уйăрасси çинчен тунă договорсене тĕпе хурса татса параççĕ.

2. Пĕрле пăхма палăртнă ыйтусем пирки федераци саккунĕ йышăничченЧăваш Республики ку ыйтусене право тĕлĕшĕнчен хăй тĕллĕн татса пама пултарать. Федерацин тивĕçлĕ саккунне йышăннă хыççăн Чăваш Республикин саккунĕсемпе ытти право акчĕсене федерацин йышăннă саккунĕпе килĕшӳллĕн ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн виçĕ уйăх хушшинче улăштараççĕ.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2010 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 27 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

## 63 статья

Раççей Федерацийĕ пăхакан тата Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республики пĕрле пăхакан ыйтусене татса парас ĕçе Чăваш Республики Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ, федераци саккунĕсем тата Чăваш Республикин

Конституцийĕ, çавăн пекех Раççей Федерацийĕн патшалăх влаçĕн органĕсемпе Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче татса памалли ыйтусемпе полномочисене уйăрасси çинчен йышăннă договорсем палăртнă шайра, унта кăтартнă мелсемпе хутшăнать.

**64 статья**

Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе килĕшӳллĕн федерацин ĕç тăвакан власть органĕсем тата Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсем пĕрле килĕшнĕ тăрăх, çакă Раççей Федерацийĕн Конституцине тата федераци саккунĕсене хирĕçлемест пулсан, хăйсен полномочийĕсен хăш-пĕр пайне пĕр-пĕрне пама пултараççĕ.

**65 статья**

Раççей Федерацийĕн патшалăх влаçĕн органĕсем тата Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче вĕсем пăхакан ыйтусем тата вĕсен полномочийĕсем пирки тухакан тавлашусене Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе тата федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн татса параççĕ.

**66 статья**

Чăваш Республикин, унăн ирĕкне палăртакан Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думинче саккун кăлармалли пуçару прави пур.

**67 статья**

1. Чăваш Республикин ялавне, гербне тата гимнне, вĕсене çырса кăтартнине, вĕсемпе официаллă майпа усă курмалли йĕркене Чăваш Республикин саккунĕпе çирĕплетеççĕ.

2. Чăваш Республикин тĕп хули – Шупашкар.

**4 сыпăк. ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПУÇЛĂХĔ**

*(4 сыпăк ятне Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

**68 статья**

1. Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Чӑваш Республикин должноҫри чи аслӑ ҫынни пулса тӑрать.

*(1-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2022 ҫулхи раштав уйӑхӗн 21-мӗшӗнчи 115 №-лӗ саккунӗпе улшӑну кӗртнӗ.)*

2. Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Чӑваш Республикин Конституцине пурнӑҫлассишӗн яваплӑ пулса тӑрать.

*(2-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2011 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи 46 №-лӗ саккунӗпе улшӑну кӗртнӗ.)*

3. Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ тивӗҫлӗ йӗркепе этем, гражданин прависемпе ирӗклӗхӗсене хӳтӗлеме кирлӗ ӗҫсем тӑвать, Чӑваш Республикинчи патшалӑх влаҫӗн органӗсен килӗшӳллӗ ӗҫне, вӗсен ҫыхӑнулӑхне йӗркелет.

*(3-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2011 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи 46 №-лӗ саккунӗпе улшӑну кӗртнӗ.)*

3.1. Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Чӑваш Республикинче ӗҫ тӑвакан влаҫа ертсе пырать.

*(Чӑваш Республикин 2022 ҫулхи раштав уйӑхӗн 21-мӗшӗнчи 115 №-лӗ саккунӗпе 3.1-мӗш пункт кӗртнӗ.)*

4. Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Чӑваш Республикин патшалӑх политикин тӗп ҫул-йӗрӗсене палӑртать, Раҫҫей Федерацийӗн Конституцийӗпе, федерацин конституци саккунӗсемпе, федераци саккунӗсемпе, Чӑваш Республикин Конституцийӗпе, Чӑваш Республикин саккунӗсемпе тата ытти нормативлӑ право акчӗсемпе, ҫавӑн пекех Раҫҫей Федерацийӗн патшалӑх влаҫӗн органӗсемпе Чӑваш Республикин патшалӑх влаҫӗн органӗсем татса памалли ыйтусемпе полномочисене уйӑрасси ҫинчен йышӑннӑ договорсемпе килӗшӳллӗн Чӑваш Республикин патшалӑхӑн ытти органӗсем патшалӑх влаҫӗн федераци органӗсемпе, федерацин патшалӑх ытти органӗсемпе, вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсемпе пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлессине йӗркелет.

*(4-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2011 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи 46 №-лӗ, 2022 ҫулхи раштав уйӑхӗн 21-мӗшӗнчи 115 №-лӗ саккунӗсемпе улшӑнусем кӗртнӗ.)*

5. Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Чӑваш Республикин ячӗпе Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗпе, Раҫҫей Федерацийӗн Федераци Пухӑвӗпе, Раҫҫей

Федерацийĕн Правительствипе, Раççей Федерацийĕн Патшалăх Канашĕпе, ытти органсемпе, организацисемпе тата должноçри çынсемпе хутшăнса ĕçлет тата Чăваш Республикин компетенцийĕн шайĕнче тулашри экономика çыхăнăвĕсене йĕркелет, Чăваш Республикин ячĕпе договорсемпе килĕшӳсем çине алă пусма пултарать.

*(5-мĕш пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

6. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ хăйĕн полномочийĕсен срокĕ тăршшĕнче федераци саккунĕсемпе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн субъекчĕн аслă должноçри çыннин статусĕпе çыхăнман ĕç-хĕле пурнăçлама тата йышăнма пултараймасть.

*(6-мĕш пункта Чăваш Республикин 2004 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 16 №-лĕ, 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

Федераци саккунĕпе палăртнă йĕрке тăрăх Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Раççей Федерацийĕн территорийĕн тулашĕнче вырнаçнă ют çĕршывсен банкĕсенче счетсем (вкладсем) уçма е тытса тăма, алăри укçа-тенкĕпе хаклă япаласем упрама юрамасть.

*(Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе абзац кĕртнĕ.)*

Чăваш Республикин Пуçлăхне Раççей Федерацийĕн Правительствин членĕсем тӳлĕшпе палăртнă чарусем тата пӳлӳсем пырса тивеççĕ, енчен те федераци саккунĕпе урăххине палăртман пулсан.

*(Чăваш Республикин 2012 çулхи çу уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ саккунĕпе абзац кĕртнĕ, Чăваш Республикин 2016 çулхи ака уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 25 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

Федераци саккунĕпе Раççей Федерацийĕн субъекчĕн чи аслă должноçри çынни тӳлĕшпе хушма требованисем палăртма пултараççĕ.

*(Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе абзац кĕртнĕ.)*

7. Чăваш Республикин Пуçлăхне саккун сыхлать.

*(7-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

**69 статья**

*(Чăваш Республикин 2012 çулхи çу уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

1. Чăваш Республикин Пуçлăхне пилĕк çула суйлаççĕ.

*(1-мĕш пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ пулма Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе, федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн пассивлă суйлав правипе усă куракан, ют патшалăх гражданлăхĕ (подданстви) е Раççей Федерацийĕнче ялан пурăнакан, Раççей Федерацийĕн гражданинĕн ют патшалăх территорийĕнче пурăнма ирĕк илни е ялан пурăнма право пуррине ĕнентерекен документ çук пулсан, Раççей Федерацийĕн 30 çул тултарнă гражданинне суйлама пултараççĕ.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

**70 статья**

*(Чăваш Республикин 2012 çулхи çу уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

1. Чăваш Республикин Пуçлăхне Раççей Федерацийĕн Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан тата федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн активлă суйлав правипе усă куракан гражданĕсем пурне те тивĕç тан тата тӳрĕ суйлав правине тĕпе хурса, вăрттăн сасăласа суйлаççĕ.

2. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн суйлавне федераци саккунĕсемпе, Чăваш Республикин Конституцийĕпе тата Чăваш Республикин саккунĕпе килĕшӳллĕн ирттереççĕ.

3. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн суйлавĕ пулман е тивĕçлĕ пулман тесе йышăнсан, федераци саккунĕпе палăртнă вăхăтра суйлава тепĕр хут ирттереççĕ. Кун пек чухне Чăваш Республикин Пуçлăхĕ должноçа кĕриччен Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн пурнăçлаççĕ.

*(3-мĕш пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

**71 статья**

*(Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

1. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ присяга тытнă самантран пуçласа должноçа кĕнĕ шутланать.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ должноçа кĕнине Чăваш Республикин Пуçлăхĕ хăйĕн указĕпе çирĕплетет, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăлараççĕ.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн полномочийĕсене пурнăçламалли срока Чăваш Республикин Пуçлăхĕ тупа тунă кунран пуçласа шутлаççĕ.

*(Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе виççĕмĕш абзац кĕртнĕ.)*

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ хăйĕн полномочийĕсене должноçра лармалли вăхăт иртнĕ май, Чăваш Республикин çĕнĕрен суйланнă Пуçлăхĕ тупа тунă самантран пуçласа пурнăçлама пăрахать.

*(Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе тăваттăмĕш абзац кĕртнĕ.)*

*(1-мĕш пункта Чăваш Республикин 2010 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 27 №-лĕ, 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

2. Должноçа кĕнĕ чухне Чăваш Республикин Пуçлăхĕ халăха тата Раççей Федерацийĕн Конституцине, Чăваш Республикин Конституцине парăнса тăма çакăн пек каласа присяга тытать:

*(Пĕрремĕш абзаца Чăваш Республикин 2010 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 27 №-лĕ, 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2012 çулхи çу уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

"Чăваш Республикин Пуçлăхĕн полномочийĕсене пурнăçланă чухне Раççей Федерацийĕн Конституцине, федераци саккунĕсене, Чăваш Республикин Конституцине тата Чăваш Республикин саккунĕсене тытса пыма, çавăн пекех Раççей Федерацийĕн Президенчĕн указĕсене тата Раççей Федерацийĕн Правительствин йышăнăвĕсене пурнăçлама, этем тата гражданин прависемпе ирĕклĕхĕсене хисеплеме тата пурнăçа кĕртсе пыма, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн пысăк тивĕçĕсене чыслăн пурнăçлама, халăхшăн шанчăклă ĕçлеме тупа тăватăп".

*(Иккĕмĕш абзаца Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнчи 40 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

3. Присягăна савăнăçлă лару-тăрура Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсем, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн членĕсем тата йыхравланă ытти çынсем умĕнче Чăваш Республикин патшалăх чĕлхисемпе каласа тытать.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ должноçа кĕнĕ ятпа ирттерекен савăнăçлă церемоние Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ, вăл çук чухне Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ уçать тата хупăнни çинчен пĕлтерет.

*(Чăваш Республикин 2010 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 27 №-лĕ саккунĕпе 3-мĕш пункт кĕртнĕ, 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

## 72 статья

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ:

*(Пĕрремĕш абзаца Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

1) Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне йĕркелет;

1.1) Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн ĕç-хĕлĕн тĕп çул-йĕрĕсене палăртать;

*(Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе 1.1-мĕш пункт кĕртнĕ.)*

2) Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен тытăмне тата структурине палăртать;

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

3) Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн патшалăх влаçĕн федераци органĕсемпе пĕрле пăхакан ыйтусем тата полномочисем çинчен калакан договорсене ырлама Чăваш Республикин Патшалăх Канашне тăратать тата вĕсене алă пусать;

*(Чăваш Республикин 2004 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 16 №-лĕ саккунĕпе 3-мĕш пункт кĕртнĕ.)*

4) Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн федерацин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсем тата Чăваш Республикин ĕç

тăвакан влаçĕн органĕсем хушшинче хăйсен полномочийĕсен хăш-пĕр пайне пĕр-пĕрне парасси çинчен тунă килĕшӳсене алă пусать;

*(Чăваш Республикин 2004 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 16 №-лĕ саккунĕпе 4-мĕш пункт кĕртнĕ, Чăваш Республикин 2006 çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 47 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

4.1) Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн ытти органĕсемпе çыхăнса ĕçлессине тивĕçтерет тата Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем федерацин ĕç тăвакан власть органĕсемпе тата вĕсен территори органĕсемпе, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе, Раççей Федерацийĕн халăх влаçĕн пĕрлехи тытăмне кĕрекен ытти органсемпе тата обществăлла пĕрлешӳсемпе килĕштерсе ĕçлессине йĕркелет;

*(Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ саккунĕпе 4.1-мĕш пункт кĕртнĕ, Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

5) Чăваш Республикин Пуçлăхĕ хăйĕн должноçне йышăннипе пĕрле Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн должноçне йышăнман чухне Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне ертсе пырать е Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ килĕшнипе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председательне уйăрса лартать тата Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председательне должноçран хăтарать;

*(5-мĕш пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

6) Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕсене, министрсене тата Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн ытти органĕсен ертӳçисене уйăрса лартать тата должноçран хăтарать;

7) Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне отставкăна яма йышăну тăвать;

8) *(8-мĕш пункта кăларса пăрахнă. – Чăваш Республикин 2003 çулхи пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 5 №-лĕ саккунĕ; 2000 çулта, 2003 çулта йышăннă Чăваш Республикин Конституцийĕн текстĕнчи 2–24-мĕш пунктсене 5–27-мĕш пунктсем тесе шутлас, Чăваш Республикин 2004 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 16 №-лĕ саккунĕ.)*

8) Чăваш Республикин Пуçлăхěн Администрацине йěркелет;

*(8-мěш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхěн 13-мěшěнчи 46 №-лě саккунěпе улшăну кěртнě.)*

9) *(9-мěш пункт хăйěн вăйне çухатнă. – Чăваш Республикин 2021 çулхи çěртме уйăхěн 21-мěшěнчи 42 №-лě саккунě.)*;

10) Чăваш Республикин Министрсен Кабинечě кăларнă йышăнусемпе хушусене, Чăваш Республикин министерствисен тата ěç тăвакан влаçăн ытти органěсен акчěсене пурнăçлассине вăхăтлăха чарать е вăйран кăларать;

11) Чăваш Республикин Патшалăх Канашěнче саккун кăлармалли пуçару тăвас правăпа усă курать;

12) Чăваш Республикин Патшалăх Канашне салатса янă пулсан унăн суйлавне ирттерме палăртать;

13) федераци саккунěнче, Чăваш Республикин Конституцийěнче кăтартнă чухне тата унта палăртнă йěркепе Чăваш Республикин Патшалăх Канашне салатса ярать;

14) çак Конституцин 80 статйин 1-мěш пункчěн 8.1-мěш çум пункчěпе килěшӳллěн Чăваш Республикин Патшалăх Канашне Чăваш Республикин патшалăх политикин тěп çул-йěрěсем çинчен калакан çырупа тухать, Чăваш Республикин Патшалăх Канашне Чăваш Республикин Министрсен Кабинечěн ěçě-хěлěн результачěсем çинчен, çав шутра Чăваш Республикин Патшалăх Канашě лартнă ыйтусемпе, çулленхи отчетсем тăратать;

*(14-мěш пункта Чăваш Республикин 2010 çулхи çу уйăхěн 28-мěшěнчи 27 №-лě, 2016 çулхи ака уйăхěн 19-мěшěнчи 25 №-лě, 2018 çулхи пуш уйăхěн 30-мěшěнчи 11 №-лě, 2022 çулхи раштав уйăхěн 21-мěшěнчи 115 №-лě саккунěсемпе улшăнусем кěртнě.)*

15) Чăваш Республикин патшалăх наградисене тата Чăваш Республикин хисеплě ячěсене парать;

16) кирлě чухне килěштерӳ процедурисем ирттерме пултарать;

17) Чăваш Республикин Министрсен Кабинечěн ларăвěсене ертсе пыма пултарать;

18) Чăваш Республикин Пуçлăхě уйăрса лартакан çынсене, саккунсенче кăтартнă чухне тата унта палăртнă йěркепе, ěçрен хăтарма пултарать;

*(18-мěш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхěн 13-мěшěнчи 46 №-лě саккунěпе улшăну кěртнě.)*

19) Чăваш Республикин саккунěсене алă пусса çирěплетет те пичетлесе кăларать е вěсене сирсе пăрахать;

20) Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн черетсĕр ларăвне пухмашкăн ыйтма, çавăн пекех Чăваш Республикин çĕнĕрен суйланă Патшалăх Канашĕн пĕрремĕш ларăвне çак Конституцире кăтартнă вăхăтран маларах ирттермешкĕн палăртма пултарать;

21) Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн тата унăн органĕсен ларăвĕсене канашлакан сасă правипе хутшăнма е асăннă органсен ларăвĕсене хутшăнмашкăн çынсем яма пултарать;

22) Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвĕсене улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси е вĕсене пăрахăçласси çинчен Чăваш Республикин Патшалăх Канашне сĕнӳсем тăратма, çавăн пекех çав йышăнусене суд урлă пăрахăçламашкăн ыйтма пултарать;

22.1) Чăваш Республикин Патшалăх Канашне Чăваш Республикинче Этем прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй тата Чăваш Республикинче Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй должноçĕсен кандидатурисем пирки сĕнӳсем тăратма пултарать;

*(Чăваш Республикин 2012 çулхи юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнчи 53 №-лĕ саккунĕпе 22.1-мĕш пункт кĕртнĕ, Чăваш Республикин 2016 çулхи ака уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 25 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

22.2) федераци саккунĕпе тата Чăваш Республикин саккунĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикинче Предпринимательсен прависене хӳтĕлес енĕпе ĕçлекен уполномоченнăя должноçа уйăрса лартать тата должноçран хăтарать;

*(Чăваш Республикин 2013 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 47 №-лĕ саккунĕпе 22.2-мĕш пункт кĕртнĕ.)*

23) Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕн членĕсенчен çуррине çирĕплетет;

*(23-мĕш пункта Чăваш Республикин 2004 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 16 №-лĕ, 2023 çулхи çу уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 31 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

24) *(24-мĕш пункт хăйĕн вăйне çухатнă. – Чăваш Республикин 2013 çулхи пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнчи 3 №-лĕ саккунĕ.)*;

25) федераци саккунĕсенче е Раççей Федерацийĕн ытти нормативлă право акчĕсенче кăтартнă чухне ĕç тăвакан влаçăн федераци органĕсен территорири органĕсен ертӳçисене лартмалли кандидатсем пирки калаçса татăлать;

26) *(26-мĕш пункт хăйĕн вăйне çухатнă. – Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕ.)*;

26.1) вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсене федераци саккунӗсемпе тата (е) Чӑваш Республикин саккунӗсемпе панӑ патшалӑхӑн уйрӑм полномочийӗсене вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсем пурнӑҫлас ӗҫе тивӗҫтерес енӗпе хӑйсен тивӗҫӗсене пурнӑҫламаншӑн е кирлӗ пек пурнӑҫламаншӑн муниципаллӑ пӗрлӗх пуҫлӑхне, вырӑнти администраци пуҫлӑхне асӑрхаттару тума е выговор пама пултарать;

*(Чӑваш Республикин 2022 ҫулхи раштав уйӑхӗн 21-мӗшӗнчи 115 №-лӗ саккунӗпе 26.1-мӗш пункт кӗртнӗ.)*

26.2) Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ ҫак статьян 26.1-мӗш пункчӗпе килӗшӳллӗн муниципаллӑ пӗрлӗх пуҫлӑхне, вырӑнти администраци пуҫлӑхне асӑрхаттару тунӑ е выговор панӑ кунран пуҫласа пӗр уйӑх хушшинче муниципаллӑ пӗрлӗх пуҫлӑхӗ, вырӑнти администраци пуҫлӑхӗ хӑйне асӑрхаттару тӑваси, выговор парасси патне илсе ҫитернӗ сӑлтавсене пӗтерме хӑйсен полномочийӗсен шайӗнче мерӑсем йышӑнман чухне муниципаллӑ пӗрлӗх пуҫлӑхне, вырӑнти администраци пуҫлӑхне должноҫран хӑтарма пултарать;

*(Чӑваш Республикин 2022 ҫулхи раштав уйӑхӗн 21-мӗшӗнчи 115 №-лӗ саккунӗпе 26.2-мӗш пункт кӗртнӗ.)*

26.3) муниципаллӑ пӗрлӗх пуҫлӑхне отставкӑна ярасси ҫинчен муниципаллӑ пӗрлӗхӗн представительлӗ органне пуҫарупа тухма пултарать, ҫав шутра вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсене йӗркелемелли пӗтӗмӗшле принципсем ҫинчен калакан федераци саккунӗпе палӑртнӑ йӗркепе вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсен ӗҫ-хӗл тухӑҫлӑхне хакламалли кӑтартусене тӑтӑшах пурнӑҫламан чухне;

*(Чӑваш Республикин 2022 ҫулхи раштав уйӑхӗн 21-мӗшӗнчи 115 №-лӗ саккунӗпе 26.3-мӗш пункт кӗртнӗ.)*

27) Раҫҫей Федерацийӗн Конституцийӗпе, федераци саккунӗсемпе, Чӑваш Республикин Конституцийӗпе тата Чӑваш Республикин саккунӗсемпе килӗшӳллӗн ытти полномочисене пурнӑҫласа пырать.

## 73 статья

1. Раҫҫей Федерацийӗн Конституцине, федераци саккунӗсене, Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗн нормативлӑ право акчӗсене, Раҫҫей Федерацийӗн Правительствин йышӑнӑвӗсене, Чӑваш Республикин Конституцине, Чӑваш Республикин саккунӗсене тӗпе хурса, вӗсене пурнӑҫласа, Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ

указсемпе хушусем кӑларать, вӗсене Чӑваш Республикин пӗтӗм территорийӗнче пурте пурнӑҫлама тивӗҫ.

*(1-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2011 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи 46 №-лӗ саккунӗпе улшӑну кӗртнӗ.)*

2. Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн указӗсемпе хушӑвӗсем Раҫҫей Федерацийӗн Конституцине, федерацин конституци саккунӗсене, Раҫҫей Федерацийӗ пӑхса тухмалли тата Раҫҫей Федерацийӗпе Раҫҫей Федерацийӗн субъекчӗсем пӗрле пӑхса тухмалли ыйтусем тӑрӑх йышӑннӑ федераци саккунӗсене, Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗн нормативлӑ право акчӗсене, Раҫҫей Федерацийӗн Правительствин йышӑнӑвӗсене, Чӑваш Республикин Конституцине тата Чӑваш Республикин саккунӗсене хирӗҫлени пулмалла мар.

*(2-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2011 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи 46 №-лӗ, 2022 ҫулхи раштав уйӑхӗн 21-мӗшӗнчи 115 №-лӗ саккунӗсемпе улшӑнусем кӗртнӗ.)*

2.1. Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн нормативлӑ право акчӗсем, енчен те федераци саккунӗпе тата (е) актсемпе хӑйсемпе вӑя кӗртмелли урӑх йӗрке палӑртса хуман пулсан, вӗсене официаллӑ йӗркепе пичетлесе кӑларнӑ кун хыҫҫӑн вунӑ кун иртсен вӑя кӗреҫҫӗ.

*(Чӑваш Республикин 2022 ҫулхи раштав уйӑхӗн 21-мӗшӗнчи 115 №-лӗ саккунӗпе 2.1-мӗш пункт кӗртнӗ.)*

3. Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн нормативлӑ право акчӗсене вӗсене йышӑннӑ кун хыҫҫӑн 5 кунран вӑраха ямасӑр Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашне ярса параҫҫӗ.

*(3-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2011 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи 46 №-лӗ, 2022 ҫулхи раштав уйӑхӗн 21-мӗшӗнчи 115 №-лӗ саккунӗсемпе улшӑнусем кӗртнӗ.)*

## 74 статья

Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн полномочийӗсем ҫакӑн чухне срокчен вӗҫленеҫҫӗ:

*(Пӗрремӗш пайӑн пӗрремӗш абзацне Чӑваш Республикин 2011 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи 46 №-лӗ саккунӗпе улшӑну кӗртнӗ.)*

1) вӑл вилсен;

2) Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ ăна шанманни çинчен пĕлтернĕ май Раççей Федерацийĕн Президенчĕ ăна должноçран хăтарсан;

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

3) хăйĕн ирĕкĕпе отставкăна кайсан;

*(3-мĕш пункта Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

4) суд ăна хавшак ăс-хакăллă е хавшакланнă ăс-хакăллă тесе йышăнсан;

5) суд вăл хыпарсăр çухални е вилни çинчен пĕлтерсен;

6) суд ăна айăпласа йышăннă приговор саккунлă вăя кĕрсен;

7) вăл ялан пурăнма Раççей Федерацийĕнчен тухса кайсан;

8) Раççей Федерацийĕн гражданлăхне çухатсан е ют патшалăх гражданлăхĕ (подданстви) е тата Раççей Федерацийĕн гражданинĕн ют патшалăх территорийĕнче пурăнма ирĕк илни е унта ялан пурăнма право пуррине ĕнентерекен ытти документ пур пулсан;

*(8-мĕш пункта Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

8.1) ют çĕршыв агенчĕн статусне илсен;

*(Чăваш Республикин 2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнчи 40 №-лĕ саккунĕпе 8.1-мĕш пункт кĕртнĕ.)*

9) Раççей Федерацийĕн Президенчĕн шанăçĕнчен тухнă май ăна Раççей Федерацийĕн Президенчĕ должноçран хăтарсан, çавăн пекех федераци саккунĕпе палăртнă ытти тĕслĕхсенче;

*(9-мĕш пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

10) *(10-мĕш пункт хăйĕн вăйне çухатнă. – Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕ.).*

Çак статьян пĕрремĕш пайĕн 1-мĕш пункчĕпе палăртнă тĕслĕхре Чăваш Республикин Пуçлăхĕн полномочийĕсем срокчен вĕçленни çинчен Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ йышăну тăвать.

Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн çак статьян пĕрремĕш пайĕн 2-мĕш, 3-мĕш, 8-мĕш, 8.1-мĕш тата 9-мĕш пункчĕсемпе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче Чăваш Республикин Пуçлăхĕн полномочийĕсем срокчен вĕçленни çинчен калакан йышăнăва Раççей Федерацийĕн Президенчĕ тăвать.

*(Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе абзац кĕртнĕ, 2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнчи 40 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн çак статьян пĕрремĕш пайĕн 4–7-мĕш пункчĕсемпе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче Чăваш Республикин Пуçлăхĕн полномочийĕсем срокчен вĕçленни çинчен калакан йышăнăва Раççей Федерацийĕн Президенчĕ ыйту тăратнă тăрăх Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ тăвать.

*(Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе абзац кĕртнĕ.)*

*(Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ саккунĕпе иккĕмĕш пай кĕртнĕ, Чăваш Республикин 2006 çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 47 №-лĕ, 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

*(Виççĕмĕш пай хăйĕн вăйне çухатнă. – Чăваш Республикин 2012 çулхи çу уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ саккунĕ.)*

## 75 статья

1. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ Чăваш Республикин Пуçлăхне шанманни çинчен çакăн чухне пĕлтерме пултарать:

*(1-мĕш пунктăн пĕрремĕш абзацне Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

1) Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Раççей Федерацийĕн Конституцине, федерацин конституци саккунĕсене, федераци саккунĕсене, Чăваш Республикин Конституцине тата Чăваш Республикин саккунĕсене хирĕçлекен актсем кăларсан, çавнашкал хирĕçлĕхсене тивĕçлĕ суд тупса палăртсан тата Чăваш Республикин Пуçлăхĕ суд йышăнăвĕ вăя кĕнĕ кунтан шутласа пĕр уйăх хушшинче асăннă хирĕçлĕхсене сирмесен;

*(1-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

2) тивĕçлĕ суд Раççей Федерацийĕн Конституцине, федерацин конституци саккунĕсене, федераци саккунĕсене, Раççей Федерацийĕн Президенчĕн указĕсене, Раççей Федерацийĕн Правительствин йышăнăвĕсене, Чăваш Республикин Конституцине тата Чăваш Республикин саккунĕсене ытти майпа сĕмсĕррĕн пăснине тупса палăртсан, енчен те çакă граждансен прависемпе ирĕклĕхĕсене массăллăн пăсма май панă пулсан;

*(2-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

3) Чăваш Республикин Пуçлăхĕ хăйĕн тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламасан.

*(Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ саккунĕпе 3-мĕш çум пункт кĕртнĕ, Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ Чăваш Республикин Пуçлăхне шанманни çинчен Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн палăртнă депутачĕсен пĕрре виççĕмĕш пайĕ пуçарнипе депутатсенчен иккĕ виççĕмĕш пайĕ сасăласан йышăну тăвать.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

3. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ Чăваш Республикин Пуçлăхне шанманни çинчен тунă йышăнăва Чăваш Республикин Пуçлăхне должноçран хăтарасси çинчен татса пама Раççей Федерацийĕн Президентне ярса парать.

*(Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ, 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

4. Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Чăваш Республикин Пуçлăхне должноçран хăтарасси çинчен йышăну тунă пулсан Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ отставкăна тухать.

*(Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ саккунĕпе 4-мĕш пункт кĕртнĕ, Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

## 76 статья

*(Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

1. Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн Президенчĕ федераци саккунĕпе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ должноçа ларичченхи тапхăр вăхăтĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçласа пыракан çынна хăйĕн указĕпе уйăрса лартма пултарать.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн полномочийĕсем срокчен вĕçленнĕ е тата Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçласа пыракан çынна уйăрса лартасси çинчен указ кăлариччен

Чăваш Республикин Пуçлăхне должноçран вăхăтлăха хăтарнă тĕслĕхсенче Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне ертсе пыман чухне вăхăтлăх Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ пурнăçлать, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ çук чухне вара – Чăваш Республикин Пуçлăхĕ тивĕçсене пайланă тăрăххăн Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ.

*(1-мĕш пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ хăйĕн сывлăхне пула е хăйĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçлама чăрмантаракан ытти сăлтавсемпе (уйрăммăн илсен, отпуск, служба командировки) хăйĕн тивĕçĕсене пурнăçлама пултараймасть пулсан, вĕсене вăхăтлăха Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне ертсе пыман чухне вăхăтлăх Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ пурнăçлать, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ çук чухне вара – Чăваш Республикин Пуçлăхĕ тивĕçсене пайланă тăрăххăн Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2.1. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан, çак статьян 1-мĕш пункчĕн иккĕмĕш абзацĕпе тата 2-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн полномочисем панă çыннăн хăйне Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçласа пыма лартас умĕн панă статус, Чăваш Республикин патшалăх должноçне йышăнакан çын статусĕ, сыхланса юлать. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçласа пыракан çын Чăваш Республикин Пуçлăхне панă правасемпе тата тивĕçĕсемпе (çак статьян 3-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă правасемсĕр пуçне) усă курать.

*(Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе 2.1-мĕш пункт кĕртнĕ.)*

3. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн ĕçĕсене вăхăтлăха туса пыраканăн Чăваш Республикин Патшалăх Канашне салатса яма, çавăн пекех Чăваш Республикин Конституцине улшăнусем кĕртесси çинчен сĕнӳсем тăратма право çук.

*(3-мĕш пункта Чăваш Республикин 2010 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 27 №-лĕ, 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

## 5 сыпăк. ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ КАНАШĚ

### 77 статья

1. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ Чăваш Республикинче патшалăх влаçĕн представительлĕ саккун кăларакан яланхи пĕртен-пĕр органĕ пулса тăрать.

*(1-мĕш пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2. Чăваш Республикин Патшалăх Канашне пилĕк çуллăха суйлаççĕ.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2003 çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 5 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

3. Чăваш Республикин Патшалăх Канашне çак Конституцин 78 статйипе палăртнă депутатсен хисепĕн иккĕ виççĕмĕш пайĕнчен кая мар суйланă пулсан вăл тулли правăллă шутланать.

4. Чăваш Республикин Патшалăх Канашне тата унăн органĕсене йĕркелемелли, вĕсем ĕçлемелли никĕссене, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ тата унăн органĕсем ирттерекен ларусен тулли правăлăхне федераци саккунĕ, Чăваш Республикин Конституцийĕ, Чăваш Республикин саккунĕсем тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Регламенчĕ палăртса параççĕ.

5. Чăваш Республикин республика бюджетне пурнăçланине тĕрĕслесе тăма Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ Чăваш Республикин Тĕрĕслевпе шутлав палатине йĕркелет, унăн тытăмне тата ĕç йĕркине Чăваш Республикин саккунĕ палăртса парать.

*(5-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

### 78 статья

1. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 44 депутатран тăрать, вĕсене пурне те тивĕç тан тата тӳрĕ суйлав правипе, вăрттăн майпа сасăласа суйлаççĕ.

*(1-мĕш пункта Чăваш Республикин 2003 çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 5 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсене суйламалли йĕркене федераци саккунĕ тата Чăваш Республикин саккунĕ палăртса параççĕ.

3. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнче професси шайĕнче (ялан-хи йĕркепе) ĕçлекен депутатсен хисепне Чăваш Республикин саккунĕпе палăртаççĕ.

*(3-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

**79 статья**

1. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ пĕрремĕш ларăва, Чăваш Республикин унчченхи суйлаври Патшалăх Канашĕн Председателĕ кăларнă хушу тăрăх, Чăваш Республикин Патшалăх Канашне суйланă кунран шутласа вăтăр кунран кая юлмасăр пухăнать, унăн йышĕнче депутатсен палăртнă пĕтĕм хисепĕн иккĕ виççĕмĕш пайĕнчен кая мар пулмалла.

*(1-мĕш пункта Чăваш Республикин 2010 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 27 №-лĕ, 2023 çулхи çу уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 31 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

2. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн черетсĕр сессине ирттермешкĕн ыйтма, çавăн пекех Чăваш Республикин çĕнĕрен суйланă Патшалăх Канашĕн пĕрремĕш ларăвне çак статьян пĕрремĕш пунктĕнчен маларах чĕнсе пухма пултарать.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

3. Чăваш Республикин çĕнĕ суйлаври Патшалăх Канашĕ ĕçлеме тытăннă кунран пуçласа Чăваш Республикин унчченхи суйлаври Патшалăх Канашĕн полномочийĕсем вĕçленеççĕ.

*(3-мĕш пункта Чăваш Республикин 2010 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 27 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

4. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председательне суйличчен Чăваш Республикин çĕнĕ суйлаври Патшалăх Канашĕн пĕрремĕш ларăвне Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн çулĕпе чи аслă депутачĕ уçать тата ертсе пырать.

**80 статья**

1. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ татса паракан ыйтусем шутне çаксем кĕреççĕ:

1) Чăваш Республикин Конституцине йышăнасси, унта улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси;

2) Чăваш Республикин саккунĕсене йышăнасси, йышăнусем тăвасси, вĕсене улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси;

3) Чăваш Республикин Конституцине тата Чăваш Республикин саккунĕсене ăнлантарса парасси;

4) Чăваш Республикин администраци-территори тытăмне тата ăна улăштармалли йĕркене палăртасси;

5) Чăваш Республикин чиккисене улăштарас ыйтусене пăхса тухасси;

6) Чăваш Республикин Пуçлăхĕ тăратнă Чăваш Республикин республика бюджетне тата ăна пурнăçлани çинчен калакан отчета çирĕплетесси;

*(6-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ, 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

7) Чăваш Республикинче стратегилле планлас ĕçе пурнăçламалли йĕркене çирĕплетесси;

*(7-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2018 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 11 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

8) Чăваш Республикин Пуçлăхĕн суйлавне ирттерме палăртасси;

*(8-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2012 çулхи çу уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

8.1) Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Чăваш Республикин патшалăх политикин тĕп çул-йĕрĕсем çинчен калакан çырăвне тата Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн ĕçĕ-хĕлĕн результачĕсем çинчен, çав шутра Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ лартнă ыйтусемпе Чăваш Республикин Пуçлăхĕ е Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ тăратнă çулленхи отчетне итлесси;

*(Чăваш Республикин 2010 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 27 №-лĕ саккунĕпе 8.1-мĕш çум пункт кĕртнĕ, Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

9) Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавне палăртасси;

9.1) Чăваш Республикинче Этем прависемпе ĕçлекен уполномоченнăя, Чăваш Республикинче Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăя должноçа уйăрса лартасси тата должноçран хăтарасси;

*(Чăваш Республикин 2012 çулхи юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнчи 53 №-лĕ саккунĕпе 9.1-мĕш çум пункт кĕртнĕ.)*

10) Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕн членĕсен йышĕн çуррине уйăрса лартасси;

*(10-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2004 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 16 №-лĕ, 2023 çулхи çу уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 31 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

11) Чăваш Республикин саккунĕсемпе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче Чăваш Республикин референдумне палăртасси;

*(11-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

12) Чăваш Республикин Пуçлăхĕ хăйĕн должноçĕпе пĕрлех Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн должноçне те йышăнмасть пулсан, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председательне уйăрса лартма килĕшӳ парасси;

*(12-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

13) Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председательне шанманни çинчен пĕлтересси;

14) *(14-мĕш çум пункт хăйĕн вăйне çухатнă. – Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕ.)*;

15) *(15-мĕш çум пункта кăларса пăрахнă, 16–32-мĕш çум пунктсене тивĕçлĕн 15–31-мĕш çум пунктсем тесе шутлас. – Чăваш Республикин 2003 çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 5 №-лĕ саккунĕ; 33-мĕш çум пункта 35-мĕш çум пункт тесе шутлас. – Чăваш Республикин 2004 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 16 №-лĕ саккунĕ.)*;

15) Чăваш Республикин саккунĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикинче миравай судьясене уйăрса лартасси;

16) Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председательне тата унăн çумĕсене суйласси, вĕсене вырăнтан кăларасси;

17) саккун проекчĕсем хатĕрлес ĕçе туса пыма, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ татса памалли ыйтусемпе йышăнусен проекчĕсене малтанлăха пăхса тухса хатĕрлеме, çавăн пекех тĕрĕслев тивĕçĕсене пурнăçлама Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн комитечĕсене йĕркелесси;

18) Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн тытăмне, ĕçлекенсен йышне тата унăн ĕçне-хĕлне тивĕçтерме тухакан тăкаксене палăртса çирĕплетесси;

19) Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думинче саккун кăлармалли пуçару правине пурнăçласси;

20) Чăваш Республикин Конституцийĕ кăтартнă чухне Чăваш Республикин Пуçлăхĕн полномочийĕсене срокчен пăрахăçлама йышăну тăвасси;

*(20-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

21) Чăваш Республикин тивĕçĕсене Чăваш Республикин республика бюджечĕ шучĕпе саплама пăхнă договорсем тунине тата пăрахăçланине çирĕплетесси;

22) Раççей Федерацийĕн налуксемпе пуçтарусем çинчен калакан саккунĕсемпе килĕшӳллĕн налуксемпе пуçтарусене палăртасси, вăя кĕртесси (пăрахăçласси), налук ставкисене (пуçтарусен ставкисене), налуксене, пуçтарусене тӳлемелли йĕркене тата вăхăтне, налук çăмăллăхĕсене (пуçтару çăмăллăхĕсене) тата (е) вĕсемпе усă курмалли сăлтавсене тата вĕсемпе усă курмалли йĕркене палăртасси (пăрахăçласси);

*(22-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

23) Чăваш Республикин патшалăх наградисене туса хурасси тата хисеплĕ ячĕсене çирĕплетесси;

24) федераци саккунĕсемпе палăртнă полномочийĕсен шайĕнче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавне ирттермелли йĕркене палăртасси;

*(24-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ, 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

25) Чăваш Республикин территорисенчи патшалăхăн бюджет тулашĕнчи фончĕсене тата вĕсене пурнăçлани çинчен калакан отчетсене çирĕплетесси;

*(Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

26) Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхне, вăл шутра организацисен устав (хушăнуллă) капиталĕнче Чăваш Республикин акцийĕсене (хутшăну тӳписене, пайсене) тытса тăмалли тата вĕсемпе усă курмалли йĕркене палăртса парасси;

*(26-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

27) Чăваш Республикин чиккисене улăштарасси çинчен тунă килĕшĕве çирĕплетесси;

28) Чăваш Республикин саккунĕсене тытса пынине тата пурнăçланине, Чăваш Республикин республика бюджетне, Чăваш Республикин патшалăхăн бюджет тулашĕнчи территори фончĕсен бюджечĕсене пурнăçлассине пурнăçа кĕртнине, Чăваш Республикин харпăрлăхĕпе усă курма çирĕплетнĕ йĕрке пурнăçланса пынине тĕрĕслесе тăрасси;

*(28-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

29) Чăваш Республикин Пуçлăхĕн, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн нормативлă право акчĕсене улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси е вĕсене пăрахăçласси çинчен Чăваш Республикин Пуçлăхне е Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне сĕнӳсем тăратасси, çавăн пекех асăннă актсем пирки суда жалоба парасси е, çирĕплетнĕ йĕркепе, асăннă нормативлă право акчĕсем Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе килĕшсе тăни пирки Раççей Федерацийĕн Конституци Судне ыйту тăратасси;

*(29-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

30) Чăваш Республикин Тĕрĕслевпе шутлав палатин председательне, председателĕн çумне тата аудиторĕсене уйăрса лартасси;

*(30-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

31) *(31-мĕш çум пункт хăйĕн вăйне çухатнă. – Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕ.)*;

32) Чăваш Республикин судьясен квалификаци коллегине общественность представителĕсене уйăрса лартасси;

*(Чăваш Республикин 2003 çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 5 №-лĕ саккунĕпе 32-мĕш çум пункт кĕртнĕ.)*

33) Чăваш Республикин Адвокат палатин квалификаци комиссине представительсем уйăрса лартасси;

*(Чăваш Республикин 2003 çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 5 №-лĕ саккунĕпе 33-мĕш çум пункт кĕртнĕ, Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

34) Чăваш Республикин Пуçлăхĕ сĕннипе пĕрле пăхса тухмалли ыйтусемпе полномочисем çинчен патшалăхăн федерацин органĕсемпе тунă договор проектне ырласси (пăрахăçласси);

*(Чăваш Республикин 2004 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 16 №-лĕ саккунĕпе 34-мĕш çум пункт кĕртнĕ, Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

35) Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ, федераци саккунĕсем, çак Конституци тата Чăваш Республикин саккунĕсем çирĕплетнĕ ытти полномочисене пурнăçласси.

2. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ саккунсене депутатсен палăртнă пĕтĕм хисепĕн çурри ытла вĕсем майлă сасăласан, енчен те федераци саккунĕпе урăххине пăхса хăварман пулсан, Чăваш Республикин Конституцине тата унта кĕртмелли улшăнусене тата хушăмсене вара депутатсен палăртнă пĕтĕм хисепĕн иккĕ виççĕмĕш пайĕнчен кая мар сасăласан йышăнать.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2010 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 27 №-лĕ, 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

3. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвĕсене, федераци саккунĕпе урăххине палăртман пулсан, палăртнă депутатсен хисепĕн ытларахăшĕ сасăласан йышăнаççĕ те вĕсене йышăннă кун хыççăн 5 кунтан вăраха ямасăр Чăваш Республикин Пуçлăхне ярса параççĕ.

*(3-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2013 çулхи пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнчи 3 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

**80.1 статья**

*(Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе 80.1 статья кĕртнĕ.)*

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ парламент тĕрĕслевне тума, çав шутра парламент ыйтнисене ярса пама пултарать. Парламент тĕрĕслевне тумалли йĕркене Чăваш Республикин саккунĕпе тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Регламенчĕпе палăртаççĕ.

**81 статья**

1. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн полномочийĕсене çакăн чухне срокчен чарса лартаççĕ:

*(Пĕрремĕш абзаца Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

1) Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ хăйне Чăваш Республикин саккунĕсемпе пăхса хăварнă йĕркепе унăн полномочийĕсене срок çитмесĕр чарса лартма йышăнсан;

*(1-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2) Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашне çак статьян 2-мĕш тата 3-мĕш пункчĕсенче пăхнă сăлтавсемпе салатса янă пулсан;

*(2-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2010 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 27 №-лĕ, 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

3) Чăваш Республикин Аслă Сучĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен хальхи йышĕн, вăл шутра депутатсем хăйсен полномочийĕсене пурнăçлама килĕшмен пирки, тулли правăлăх çукки çинчен тунă йышăну вăя кĕнĕ пулсан;

4) федераци саккунĕпе палăртнă ытти сăлтавсем пулсан.

*(Чăваш Республикин 2004 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 16 №-лĕ саккунĕпе 4-мĕш çум пункт кĕртнĕ.)*

2. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ йышăннă Чăваш Республикин Конституцийĕ тата (е) Чăваш Республикин саккунĕ, урăх нормативлă право акчĕ Раççей Федерацийĕн Конституцине, федерацин конституци саккунĕсене, Раççей Федерацийĕ татса паракан ыйтусемпе, Раççей Федерацийĕ тата Раççей Федерацийĕн субъекчĕсем татса паракан ыйтусемпе кăларнă федераци саккунĕсене, Чăваш Республикин Конституцине хирĕçлеççĕ пулсан, çак хирĕçлĕхсене тивĕçлĕ суд тупса палăртсан, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ вара суд йышăнăвĕ вăя кĕнĕ кунран шутласа ултă уйăх хушшинче вĕсене сирмен пулсан Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн полномочийĕсене срокчен чарса лартасси çинчен йышăну тăвать.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

3. Енчен те тулли правӑллӑ йышпа суйланӑ Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗ виҫӗ уйӑх хушшинче пӗр лару та ирттерменнине тивӗҫлӗ судӑн вӑя кӗнӗ йышӑнӑвӗпе палӑртсан Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн полномочийӗсене срокчен чарса лартасси ҫинчен йышӑну тума пултарать.

Енчен те тивӗҫлӗ судӑн вӑя кӗнӗ йышӑнӑвӗпе Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗ ӑна суйланӑ кунран пуҫласа виҫӗ уйӑх хушшинче тулли правӑллӑ йышпа лару ирттерменнине палӑртсан Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ тулли правӑллӑ йышпа ҫӗнӗрен суйланӑ Чӑваш Республикин патшалӑх влаҫӗн асӑннӑ органӗн полномочийӗсене срокчен чарса лартасси ҫинчен йышӑну тума пултарать.

Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ тивӗҫлӗ судӑн йышӑнӑвӗ вӑя кӗнӗ кунран пуҫласа виҫӗ уйӑх хушшинче Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн полномочийӗсене срокчен чарса лартасси ҫинчен йышӑну тума пултарать.

*(Чӑваш Республикин 2010 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 28-мӗшӗнчи 27 №-лӗ саккунӗпе 3-мӗш пункт кӗртнӗ, Чӑваш Республикин 2011 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи 46 №-лӗ саккунӗпе улшӑну кӗртнӗ.)*

## 82 статья

1. Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн полномочийӗсене срокчен чарса лартма йышӑнсан ҫавӑн ҫинчен указ кӑларать.

*(1-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2011 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи 46 №-лӗ саккунӗпе улшӑну кӗртнӗ.)*

2. Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн полномочийӗсене срокчен чарса лартнӑ пулсан Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн черетсӗр суйлавне ирттерме палӑртаҫҫӗ. Ҫав суйлава федераци саккунӗсем тата Чӑваш Республикин саккунӗсем палӑртнӑ сроксенче ирттереҫҫӗ.

*(2-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2003 ҫулхи пуш уйӑхӗн 27-мӗшӗнчи 5 №-лӗ саккунӗпе улшӑну кӗртнӗ.)*

## 83 статья

1. Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн Председателӗ:

1) Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн ларӑвӗсене ертсе пырать тата унӑн шалти ӗҫ йӗркине тытса пырать;

2) Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен саккун кăларакан органĕсемпе калаçусем ирттерет тата вĕсемпе тунă килĕшӳсене алă пусса çирĕплетет;

*(2-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

3) республикăра тата унăн тулашĕнче Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ ячĕпе ĕçлет;

4) *(4-мĕш çум пункт хăйĕн вăйне çухатнă. – Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕ.)*

5) федераци саккунĕсем, Чăваш Республикин Конституцийĕ, Чăваш Республикин саккунĕсем тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Регламенчĕ кăтартса панă ытти полномочисене пурнăçлать.

*(Чăваш Республикин 2004 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 16 №-лĕ саккунĕпе 5-мĕш çум пункт кĕртнĕ.)*

2. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председательне Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен йышĕнчен, депутатсен палăртнă пĕтĕм хисепĕн ытларахăшĕ сасăласан, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн полномочи вăхăчĕлĕх суйлаççĕ.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

## 84 статья

1. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ пулма Раççей Федерацийĕнче ялан пурăнакан, ют патшалăх гражданлăхĕ (подданстви) е тата Раççей Федерацийĕн гражданинĕ ют патшалăх территорийĕнче пурăнма ирĕк илни е унта ялан пурăнма право пуррине ĕнентерекен ытти документ пулман, федераци саккунĕпе, Чăваш Республикин Конституцийĕпе тата (е) Чăваш Республикин саккунĕпе килĕшӳллĕн пассивлă суйлав правипе усă куракан, Раççей Федерацийĕн 21 çула çитнĕ гражданинне суйлама пултараççĕ.

*(1-мĕш пункта Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ хăйĕн полномочийĕсен срокĕ тăршшĕнче федераци саккунĕсемпе килĕшӳллĕн депутат статусĕпе çыхăнман ĕç-хĕле пурнăçлама тата йышăнма пултараймасть.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2004 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 16 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

3. Раççей Федерацийĕн саккунĕсенче урăхла пăхман пулсан, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн хăйĕн полномочийĕсене професси шайĕнче (яланхи йĕркепе) пурнăçлакан депутачĕ вĕрентӳ, ăслăлăх ĕçĕсĕр тата ытти йышши пултарулăх ĕçĕсĕр пусне тӳлевлĕ урăх ĕçре ĕçлеме пултараймасть.

*(3-мĕш пункта Чăваш Республикин 2003 çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 5 №-лĕ, 2013 çулхи пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнчи 3 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

4. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ хăйĕн статусĕпе депутат полномочийĕсене пурнăçлассипе çыхăнман ĕçре усă курма пултараймасть.

5. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсем хăйсен полномочийĕсен пĕтĕм вăхăтĕнче никам тĕкĕнме юраман çын шутланаççĕ, çакна федераци саккунĕ гарантилет.

## 85 статья

1. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнче саккун кăлармалли пуçару тума Чăваш Республикин Пуçлăхĕн, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн комитечĕсен, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн, Чăваш Республикин прокурорĕн, вырăнти хăй тытăмлăхăн представительлĕ органĕсен право пур. Çавăн пекех, хăйсем пăхакан ыйтусемпе, Чăваш Республикин Аслă Сучĕн тата Чăваш Республикин Арбитраж сучĕн саккун кăларма пуçару тумалли право пур.

*(1-мĕш пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2. Чăваш Республикин Патшалăх Канашне Чăваш Республикин Пуçлăхĕ тăратнă саккунсен проекчĕсене, вăл сĕннĕ тăрăх, пуринчен малтан пăхса тухаççĕ.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

3. Налуксене (пуçтарусене) палăртасси, вăя кĕртесси е пăрахăçласси, налук ставкисене (пуçтарусен ставкисене), налуксене (пуçтарусене) тӳлемелли йĕркене тата вăхăта улшăнусем кĕртесси, налук çăмăллăхĕсене (пуçтару çăмăллăхĕсене) тата (е) вĕсемпе усă курмалли сăлтавсене тата йĕркене палăртасси (пăрахăçласси) çинчен, укçа-тенкĕпе тивĕçтерме палăртакан тăкаксене пăхса

хăварнă ытти саккунсен проекчĕсене, тăкаксене Чăваш Республикин республика бюджетĕнчи укçа-тенкĕпе саплама палăртакан ытти саккунсен проекчĕсене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ Чăваш Республикин Пуçлăхĕ тăратнипе е вăл пĕтĕмлетӳ панипе пăхса тухать. Çак пĕтĕмлетĕве саккун проекчĕ Чăваш Республикин Пуçлăхĕ патне çитнĕ кунран шутласа 30 кунран вăраха ямасăр Чăваш Республикин Патшалăх Канашне çитерсе памалла.

*(3-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

## 86 статья

1. Чăваш Республикин саккунне йышăнсан ăна пилĕк кун хушшинче Чăваш Республикин Пуçлăхне алă пусса çирĕплетме тата халăха пĕлтерме ярса параççĕ.

*(1-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2. Чăваш Республикин саккунне çитерсе панă хыççăн Чăваш Республикин Пуçлăхĕ ăна вун тăватă кун хушшинче алă пусса çирĕплетет тата пичетлесе кăларса халăха пĕлтерет.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

3. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ саккуна çитерсе панă хыççăн вун тăватă кун хушшинче ăна мĕншĕн каялла тавăрса панине сăлтавласа е тата унта улшăнусемпе хушса çырнисем çинчен сĕнӳсем кĕртсе сирсе ярать пулсан Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ, çирĕплетнĕ йĕркепе, çав саккуна çĕнĕрен пăхса тухать. Иккĕмĕш хут пăхса тухнă чухне Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен палăртнă пĕтĕм хисепĕн иккĕ виççĕмĕш пайĕнчен кая мар ытларахăшĕ саккуна малтанхинчен улăштармасăрах ырлас пулсан Чăваш Республикин Пуçлăхĕ ăна иккĕмĕш хут сирсе яма пултараймасть, вара çитерсе панă кунран шутласа çичĕ кун хушшинче саккуна алă пусса çирĕплетмелле те пичетлесе кăлармалла.

*(3-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

4. Федераци саккунĕпе тата (е) Чăваш Республикин Конституцийĕпе, Чăваш Республикин саккунĕпе хăйсемпе Чăваш Республикин Конституцине, Чăваш Республикин саккунне вăя кĕртмелли урăх йĕрке палăртман пулсан, Чăваш Республикин Конституцийĕ, Чăваш Республикин саккунĕ вĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕреççĕ.

*(4-мĕш пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

## 6 сыпăк. ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ

### 87 статья

1. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ Чăваш Республикинчи патшалăх влаçĕн ĕç тăвакан чи аслă яланхи органĕ пулса тăрать.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ Раççей Федерацийĕн Конституцине, федерацин конституци саккунĕсене тата Раççей Федерацийĕн ытти нормативлă право акчĕсене, Чăваш Республикин Конституцине, Чăваш Республикин саккунĕсене тата ытти нормативлă право акчĕсене пурнăçлама тата Чăваш Республикин ĕç тăвакан ытти органĕсене килĕштерсе ĕçлеме майсем туса парать.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2.1. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышне кĕрет, ăна Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ килĕшнĕ тăрăх должноçа уйăрса лартаççĕ тата должноçран Чăваш Республикин Пуçлăхĕ хăтарать.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне ертсе пынă чухне Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председательне уйăрса лартас ĕçе тумаççĕ.

*(Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе 2.1-мĕш пункт кĕртнĕ.)*

3. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председательне, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ килĕшнипе, Чăваш Республикин Пуçлăхĕ уйăрса лартать. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн кандидатури пирки Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Чăваш Республикин Пуçлăхĕн

должноçне кĕнĕ хыççăн е Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ отставкăна тухнă хыççăн 20 кунран кая юлмасăр Чăваш Республикин Патшалăх Канашне сĕнӳ тăрататть. Тăратнă кандидата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ сирсе ярсан Чăваш Республикин Пуçлăхĕ 15 кунран вăраха ямасăр Чăваш Республикин Патшалăх Канашне калаçса килĕшме çĕнĕ кандидатура тăрататть. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ Чăваш Республикин Пуçлăхĕ тăратнă кандидатурăна 14 кун хушшинче пăхса тухать.

*(3-мĕш пункта Чăваш Республикин 2005 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ, 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

4. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн ĕçне йĕркелет.

*(4-мĕш пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

5. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ е вăл шанса янă çынсем Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн тата унăн органĕсен ларăвĕсене канашлакан сасă правипе хутшăнма пултараççĕ.

**88 статья**

1. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ:

1) Чăваш Республикин социаллă пурнăçĕпе экономикине аталантарас тĕллевпе мерăсем туса хатĕрлет тата пурнăçласа пырать;

*(1-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2) укçа-тенкĕ, ăслăлăх, вĕрентӳ, культура, сывлăх сыхлавĕ, физкультурăпа спорт, социаллă пулăшу, çул çӳрев хăрушсăрлăхĕ тата экологи тĕлĕшĕпе пĕрпĕтĕм патшалăх политики тытса пырас ĕçе хутшăнать;

*(2-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2013 çулхи пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнчи 3 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

3) хăйĕн полномочийĕсен шайĕнче этем, гражданин прависемпе ирĕклĕхĕсене пурнăçлас, тивĕçтерес тата вĕсене хӳтĕлес, харпăрлăха тата обществăри йĕркелĕхе сыхлас, терроризмпа тата экстремизмпа, преступлени тунисемпе кĕрешес енĕпе мĕн кирлине тăвать;

*(3-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2010 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 27 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

4) Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашне тăратмашкăн Чăваш Республикин республика бюджечĕн проектне хатĕрлет;

*(4-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2018 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 11 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

4.1) Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ тытса пыракан ыйтусем енĕпе стратегилле планлас ĕç докуменчĕсене туса хатĕрлемелли тата вĕсене тӳрлетӳсем кĕртмелли йĕркене палăртать тата çавнашкал документсене çирĕплетет (ырласа йышăнать);

*(Чăваш Республикин 2018 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 11 №-лĕ саккунĕпе 4.1-мĕш çум пункт кĕртнĕ.)*

5) Чăваш Республикин республика бюджетне пурнăçлассине тивĕçтерет тата çав бюджета пурнăçлани çинчен калакан отчета Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашне тăратма туса хатĕрлет;

*(5-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

5.1) Чăваш Республикин Пуçлăхĕ е Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашне тăратма Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн ĕçĕ-хĕлĕн результачĕсем çинчен калакан çулленхи отчет, Чăваш Республикин патшалăх программисене пурнăçлани тата вĕсен тухăçлăхне хак пани çинчен калакан çулталăкри пĕрлештернĕ доклад хатĕрлет;

*(Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе 5.1-мĕш çум пункт кĕртнĕ.)*

6) Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхне тытса унпа усă курать, çавăн пекех, федераци саккунĕсемпе тата Раççей Федерацийĕн ытти нормативлă право акчĕсемпе килĕшӳллĕн, Чăваш Республикине пăхма панă федераци пурлăхне тытса тăрать;

7) Чăваш Республикин налуксене (пуçтарусене) палăртасси, вăя кĕртесси е пăрахăçласси, налук ставкисене (пуçтарусен ставкисене), налуксене (пуçтарусене) тӳлемелли йĕркене тата вăхăта улшăнусем кĕртесси, налук çăмăллăхĕсене (пуçтару çăмăллăхĕсене) тата (е) вĕсемпе усă курмалли сăлтавсене тата йĕркене палăртасси (пăрахăçласси) çинчен, Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенки шучĕпе тивĕçтерме палăртакан тăкаксене пăхса

хăварнă ытти саккунсен проекчĕсем пирки, Чăваш Республикин Пуçлăхĕ хушнипе, пĕтĕмлетӳсем парать;

*(7-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

8) *(8-мĕш çум пункта кăларса пăрахнă. – Чăваш Республикин 2004 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 16 №-лĕ саккунĕ.)*;

9) вырăнти хăй тытăмлăх органĕ, вырăнти хăй тытăмлăхăн ĕçĕнчи должноçри çынни кăларнă право акчĕсем Раççей Федерацийĕн Конституцине, федерацин конституци саккунĕсене, федераци саккунĕсене тата Раççей Федерацийĕн ытти нормативлă право акчĕсене, Чăваш Республикин Конституцине, Чăваш Республикин саккунĕсене тата ытти нормативлă право акчĕсене хирĕçлеççĕ пулсан Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ вĕсене çав асăннă актсене Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕштермешкĕн сĕнет, çавăн пекех асăннă актсем пирки суда жалоба пама пултарать;

*(9-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

9.1) регионти патшалăх тĕрĕслевне (надзорне) пурнăçлама полномочи панă Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсене палăртать, вĕсен йĕркелӳ тытăмне, полномочийĕсене, ĕç-хĕлне тата ĕçĕ-хĕлĕн йĕркине çирĕплетет тата асăннă Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен должноçри çыннисен переченьне тата вĕсен полномочийĕсене палăртать;

*(Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе 9.1-мĕш çум пункт кĕртнĕ.)*

9.2) федерацин ĕç тăвакан власть органĕсен уйрăм полномочийĕсене Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен ĕç тăвакан власть органĕсене федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн парас ĕçе палăртса хунă Раççей Федерацийĕн Президенчĕн нормативлă право акчĕсемпе тата Раççей Федерацийĕн Правительствин нормативлă право акчĕсемпе палăртса хăйне шанса панă полномочисене пурнăçлать;

*(Чăваш Республикин 2016 çулхи ака уйăхĕн 19-мĕшĕнчи 25 №-лĕ саккунĕпе 9.2-мĕш çум пункт кĕртнĕ.)*

10) Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ, федераци саккунĕсем, Чăваш Республикин Конституцийĕ, Чăваш Республикин саккунĕсем, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн указĕсем, çавăн пекех федерацин ĕç тăвакан власть органĕсен

уйрăм полномочийĕсене Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен ĕç тăвакан власть органĕсене парас ĕçе палăртса хунă Раççей Федерацийĕн Президенчĕн нормативлă право акчĕсемпе тата Раççей Федерацийĕн Правительствин нормативлă право акчĕсемпе палăртса Раççей Федерацийĕн Конституцийĕн 78 статйипе килĕшӳллĕн федерацин ĕç тăвакан власть органĕсемпе тунă килĕшӳсем палăртса панă ытти полномочисене пурнăçлать.

*(10-мĕш çум пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

2. Çак Конституципе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне йĕркелемелли тата вăл ĕçлемелли никĕссене Чăваш Республикин саккунĕпе çирĕплетеççĕ.

## 89 статья

1. Федераци саккунĕсене, Раççей Федерацийĕн Президенчĕн нормативлă право акчĕсене, Раççей Федерацийĕн Правительствин йышăнăвĕсене, Чăваш Республикин саккунĕсене, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн указĕсемпе хушăвĕсене пурнăçласа, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ йышăнусем тăвать тата хушусем кăларать.

*(1-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕсемпе хушăвĕсене Чăваш Республикин пĕтĕм территорийĕнче пурте пурнăçлама тивĕç.

3. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕсемпе хушăвĕсем Раççей Федерацийĕн Конституцине, федерацин конституци саккунĕсене, Раççей Федерацийĕ пăхса тухмалли тата Раççей Федерацийĕпе Раççей Федерацийĕн субъекчĕсем пĕрле пăхса тухмалли ыйтусемпе йышăннă федераци саккунĕсене, Раççей Федерацийĕн Президенчĕн указĕсене, Раççей Федерацийĕн Правительствин йышăнăвĕсене, Чăваш Республикин Конституцине, Чăваш Республикин саккунĕсене, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн указĕсемпе хушăвĕсене хирĕçлени пулмалла мар.

*(3-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

3.1. Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн нормативлӑ право акчӗсем, енчен те федераци саккунӗпе тата (е) актсемпе хӑйсемпе вӑя кӗртмелли урӑх йӗрке палӑртса хуман пулсан, вӗсене официаллӑ йӗркепе пичетлесе кӑларнӑ кун хыҫҫӑн вунӑ кун иртсен вӑя кӗреҫҫӗ.

*(Чӑваш Республикин 2022 ҫулхи раштав уйӑхӗн 21-мӗшӗнчи 115 №-лӗ саккунӗпе 3.1-мӗш пункт кӗртнӗ.)*

4. Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн йышӑнӑвӗсемпе хушӑвӗсене Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ пӑрахӑҫлама пултарать.

*(4-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2011 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи 46 №-лӗ саккунӗпе улшӑну кӗртнӗ.)*

5. Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗ нормативлӑ право акчӗсене йышӑннӑ хыҫҫӑн 5 кунран вӑраха ямасӑр вӗсене Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашне ярса параҫҫӗ.

**90 статья**

Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн хӑйӗн тивӗҫӗсен шайӗнче Чӑваш Республикин министерствисен тата ӗҫ тӑвакан влаҫӑн ытти органӗсен акчӗсене чарса лартма е пӑрахӑҫлама право пур.

*(90 статьяна Чӑваш Республикин 2011 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи 46 №-лӗ саккунӗпе улшӑну кӗртнӗ.)*

**91 статья**

1. Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗ Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн полномочи вӑхӑчӗ вӗҫленсен тата федераци саккунӗпе палӑртнӑ ытти сӑлтавсемпе отставкӑна тухать.

*(1-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2005 ҫулхи ака уйӑхӗн 18-мӗшӗнчи 19 №-лӗ, 2011 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи 46 №-лӗ саккунӗсемпе улшӑнусем кӗртнӗ.)*

2. Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗ отставкӑна пама пултарать, ӑна Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ йышӑнма е сирсе яма пултарать.

*(2-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2011 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи 46 №-лӗ саккунӗпе улшӑну кӗртнӗ.)*

3. Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Чӑваш Республикин Министрсен Кабинетне отставкӑна ярасси ҫинчен йышӑну тума пултарать.

*(3-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2011 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи 46 №-лӗ саккунӗпе улшӑну кӗртнӗ.)*

4. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председательне шанманни çинчен пĕлтерме пултарать.

5. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председательне шанманни çинчен йышăну тума Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен палăртнă пĕтĕм хисепĕнчен ытларахăшĕ сасăлани кирлĕ.

*(5-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ, 2022 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 115 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

6. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председательне шанманни çинчен пĕлтернĕ хыççăн Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председательне ĕçрен хăтарма е Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăнăвне хирĕçлеме пултарать. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ виçĕ уйăх хушшинче тепĕр хут Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председательне шанманни çинчен пĕлтерсен Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председательне должноçран кăларать. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ çакăн пек йышăнсан Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ пĕтĕмĕшпе отставкăна тухать.

*(6-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

7. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ отставкăна тухас пулсан вăл Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çĕнĕ йышне йĕркеличчен ĕçлесе пырать.

*(7-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

## 7 сыпăк. ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ СУД ВЛАÇĔ

*(7 сыпăк ятне Чăваш Республикин 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 26-мĕшĕнчи 34 №-лĕ, 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

### 92 статья

1. Суд ĕçне Чăваш Республикинче суд кăна туса пыма пултарать.

2. Пĕтĕмĕшле юрисдикци сучĕсенче суд ĕçне тата ĕç хучĕсене çырас ĕçе вырăс чĕлхипе е чăваш тата вырăс чĕлхисемпе туса пыраççĕ. Арбитраж судĕнче вара ку ĕçе вырăс чĕлхипе тăваççĕ.

**93 статья**

1. Чăваш Республикинче суд тытăмне Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе тата федерацин конституци саккунĕпе килĕшӳллĕн йĕркелеççĕ. Чăваш Республикин саккунĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин миравай судйисене уйăрса лартаççĕ.

*(1-мĕш пункта Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2. Судьясем никама та пăхăнмаççĕ, Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ тата федераци саккунĕ кăтартнă тăрăх ĕçлеççĕ.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

**94 статья**

Федераци сучĕсен тытăмне, полномочийĕсене, йĕркелĕвне, вĕсен ĕç йĕркине федерацин конституци саккунĕ, Чăваш Республикин миравай судйисем тĕлĕшпе вара, Чăваш Республикин полномочийĕсен шайĕнче, Чăваш Республикин Конституцийĕ тата Чăваш Республикин саккунĕсем палăртса параççĕ.

*(94 статьяна Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

**95 статья**

*(95 статья хăйĕн вăйне çухатнă. – Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕ.)*

## 8 сыпăк. ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

**96 статья**

1. Чăваш Республикин территорийĕнче вырăнти хăй тытăмлăх пулмаллине йышăнаççĕ тата гарантилеççĕ.

2. Граждансем вырăнти хăй тытăмлăха референдум, суйлав ирттернипе тата хăйсен ирĕкне тӳррĕн палăртмалли ытти мелсемпе, çавăн пекех суйлавлă органсем тата вырăнти хăй тытăмлăхăн должноçри çыннисем урлă пурнăçлаççĕ.

3. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсен системине кĕмеççĕ.

3.1. Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе килĕшӳллĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе патшалăх влаçĕн органĕсем Раççей Федерацийĕнчи халăх влаçĕн пĕрлехи тытăмне кĕреççĕ тата тивĕçлĕ территорире пурăнакан халăх интересĕсене шута илсе унăн ыйтăвĕсене тухăçлăрах татса парас тĕллевпе тачă çыхăнса ĕçлеççĕ.

*(Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе 3.1-мĕш пункт кĕртнĕ.)*

3.2. Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене йĕркелес, федераци саккунĕпе палăртнă йĕркепе тата тĕслĕхсенче вырăнти хăй тытăмлăхăн должноçри çыннисене должноçа уйăрса лартас тата должноçран хăтарас ĕçе хутшăнма пултараççĕ.

*(Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе 3.2-мĕш пункт кĕртнĕ.)*

4. Вырăнти хăй тытăмлăх ĕçне туса пыракан территорисен чиккисене тивĕçлĕ территорири халăх шухăш-кăмăлне шута илсе кăна федераци саккунĕпе палăртнă йĕркепе улăштарма пултараççĕ.

*(4-мĕш пункта Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

**97 статья**

Вырăнти хăй тытăмлăх, федераци саккунĕпе тата Чăваш Республикин саккунĕпе килĕшӳллĕн, вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене вырăнти халăха хăй тĕллĕн, истори тата йăла-йĕрке уйрăмлăхсене шута илсе татса пама кирлĕ майсем туса парать.

**98 статья**

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тата вĕсен должноçри çыннисен полномочийĕсене, йĕркелĕвне, ĕç мелĕсене федераци саккунĕсем тата Чăваш Республикин саккунĕсем палăртса параççĕ.

**99 статья**

1. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем харпăр хăй тĕллĕн муниципалитет харпăрлăхне тытса пыраççĕ, вырăнти бюджета хатĕрлеççĕ, çирĕплетеççĕ тата

пурнăçлаççĕ, вырăнти налуксемпе тӳлевсене палăртса хураççĕ, вырăн пĕлтерĕшлĕ ытти ыйтусене татса параççĕ, çавăн пекех федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн хăйсен компетенцийĕн шайĕнче пурне те тивĕçмелли медицина пулăшăвĕпе тивĕçтереççĕ.

*(1-мĕш пункта Чăваш Республикин 2012 çулхи çу уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ, 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕсемпе улшăнусем кĕртнĕ.)*

2. Чăваш Республикин саккунĕпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене патшалăх полномочийĕсене, çав полномочисене пурнăçлама кирлĕ пурлăхпа укçа-тенкĕ уйăрса панă чухне, хăшне-пĕрне шанса пама пултараççĕ. Шанса панă полномочисене пурнăçланине Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем тĕрĕслесе тăраççĕ.

*(2-мĕш пункта Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

### 100 статья

Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăхăн çакăн пек право гарантийĕсем пур: судра хӳтĕленме, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсемпе çыхăнса ĕçленĕ май халăхпа тумалли ĕçсене пурнăçланине пулнă хушма тăкаксене саплаштарма, çавăн пекех вырăнти хăй тытăмлăхăн Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ тата федераци саккунĕсем çирĕплетнĕ прависене пӳлсе чакарнине чарма.

*(100 статьяна Чăваш Республикин 2021 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

## 9 сыпăк. КОНСТИТУЦИЕ УЛШĂНУСЕМ ТАТА ХУШĂМСЕМ КĔРТЕССИ

### 101 статья

1. Чăваш Республикин Конституцине улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси çинчен Чăваш Республикин Патшалăх Канашне Чăваш Республикин Пуçлăхĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен ушкăнĕ – депутатсен палăртнă пĕтĕм хисепĕн пĕрре виççĕмĕш пайĕнчен кая мар – сĕнӳсем пама пултараççĕ.

*(1-мĕш пункта Чăваш Республикин 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунĕпе улшăну кĕртнĕ.)*

2. Чӑваш Республикин Конституцине Чӑваш Республикин саккунӗпе улшӑнусем тата хушӑмсем кӗртеҫҫӗ, ку саккуна Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗ Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн депутачӗсен палӑртнӑ пӗтӗм хисепӗн иккӗ виҫҫӗмӗш пайӗнчен кая мар майлӑ сасӑласан йышӑнать.

*(2-мӗш пункта Чӑваш Республикин 2003 ҫулхи пуш уйӑхӗн 27-мӗшӗнчи 5 №-лӗ саккунӗпе улшӑну кӗртнӗ.)*

## 10 сыпӑк. ПӖТӖМЛЕТӰЛЛӖ ТАТА КУҪӐМЛӐ ПОЛОЖЕНИСЕМ

### 102 статья

Чӑваш Республикин Конституцине Чӑваш Республикин саккунӗпе вӑя кӗртеҫҫӗ.

Ҫак Конституци вӑя кӗнӗ хыҫҫӑн, ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах Чӑваш Республикин 1978 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 31-мӗшӗнче йышӑннӑ Конституцийӗ (Тӗп Саккунӗ), унта каярахпа кӗртнӗ улшӑнусемпе хушӑмсем вӑйран тухаҫҫӗ.

### 103 статья

Чӑваш Республикин ҫак Конституцийӗ вӑя кӗриччен вӑйра тӑнӑ саккунсемпе, право акчӗсемпе вӗсем Чӑваш Республикин Конституцине хирӗҫлемен пайӗ таран усӑ кураҫҫӗ.

### 104 статья

Чӑваш Республикин Конституцийӗпе (Тӗп Саккунӗпе) килӗшӳллӗн суйланӑ Чӑваш Республикин Президенчӗ тата Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗ ҫак Конституци вӑя кӗнӗ кунран пуҫласа вӑл палӑртса панӑ полномочисене хӑйсене суйланӑ срок тухиччен пурнӑҫлаҫҫӗ.

### 105 статья

Ҫак Конституци вӑя кӗнӗ кунран пуҫласа Чӑваш Республикин Конституцийӗ (Тӗп Саккунӗ) Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗ – Чӑваш Республикин Правительстви валли палӑртса панӑ правӑсем, тивӗҫсем тата яваплӑх Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗ ҫине куҫаҫҫӗ, малашне вӑл Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗ ятлӑ пулать.